Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 29 ЕРНЕКУН

98 (4911)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци çекретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Промышлĕннăçпа транспăртри ударниксемпе ударницăсен нумай мĕлйунлă çарне, стаханăвĕцсемпе стаханăвкăсене — пирĕн çĕршывăн йатлă çыннисене — большевикла салам!

(ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 çулхи Майăн 1-мĕшне ирттерме панă лозунгсенчен)

Социалисăмла ăмăрту — хăватлă вăй

Епĕр Совет çĕршывĕн ĕçсыннисем, Ленин — Сталин партийĕ йĕртсе пынипе, коммунизм патне малала хăвăрттăн та шанчăклăн пыратпăр. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш пилĕкçуллăх планĕсене анăçлăн пурнăçа кĕртнипе пирĕн çĕршыв никам та, нихăçан та çĕнтереймен хăватлă çĕршыв пулса тăчĕ. Ĕçсыннисем пуйăн, чăплă пурнăçпа пурăнма тытăнчĕç. Çак историлле çĕнтерӳсене [illegible] „чи малтан, рабочисемпе колхозниксем, инженерсемпе техниксем массипе пĕрле социалисăмлă ăмăртупа ударлă ĕçе сарса пырас тĕлĕшпе çав тери хăватлă ĕçлесе пынă мĕлйунлă массăсен хастарлăхĕпе, вĕсем нимĕн умĕнче те чаранса тăманнипе, вĕсен хусăлăхĕпе" (Сталин).

В. И. Ленин хăйĕн „Ăмăртăва мĕнле организацилемелле" ятлă статйинче ăмăрту ĕçсыннисен анлă массисен творчествăлла хастарлăхне çĕклемелли вăй пулат, тесе кăтартса панă. „Социалисăмлă ăмăртăва сӳнтермест кăна ĕç мар,— тенĕ Ленин, — пачах урăхла, вăл ăна пусланса чăн-чăн анлăн, чăн-чăн массăллăн ĕçе кĕртсе пыма, ĕçсыннисен чăн-чăн ытларахăшне, вĕсем хăйсене хăйсем палăртса пама, хăйсен пултаруллăхне [illegible] пекех, халăх хушшинчи [illegible] талантсене, — капитализм [illegible] мĕлйуншар ирĕк, [illegible] палăрса тухма пулăшакан ĕçе йăвăçтарма майсем уçса парат".

Пайан, социалисăмлă ăмăртăн [illegible] йухăмĕ пуçланса кайни тăхăр çул тултарнă кун, Ленин ăмăрту çинчен панă лозунг ССР Союзĕнче ĕçсыннисен мĕлйуншар массисен йухăмĕн палăрĕ пулса тăнине куратпăр. Социалисăмлă ăмăрту йалавĕ айне тăрса пирĕн çĕршыв кивĕ власран йулнă, [illegible] граждан вăрçи пĕтĕмпех [illegible] çалăха йухарĕ.

Социалисăмлă ăмăрту йалавĕ айне тăрса Совет Союзĕнчи сталинла икĕ пилĕкçуллăх планĕсене анăçлăн пурнăçа кĕртсе хамăр çĕршыва социализмлă çĕршыв туса хутăмăр.

Социалисăмлă ăмăрту ĕçсыннисен мĕлйуншар таланчĕсене çĕклерĕ. Вĕсен чаплă мастарлăхне, творчествăлла хăватлă вăйне çĕклерĕ. Социалисăмлă ăмăрту ударниксене, стахановецсене çуратрĕ. Стахановла йухăм пуçланса кайнине Сталин йулташ социалисăмлă ăмăрту çĕнĕ, çӳлĕ пусăма хăпарни пулат, рабочисен социалисăмлă строительствин историне кĕрекен йухăмĕ пулат, тесе хак пачĕ. Большевиксен партийĕ стахановла йухăма вăхăтра пысăккăн хаклаçа ăна анлăн сарса пыма тĕрĕс çул кăтартса пачĕ.

Социалисăмлă ăмăртун çĕнĕ, çӳлĕ пусăмĕ — стахановла йухăм халăх хусалăхĕн пур участокĕнче те, Совет Союзĕн пур районĕсене те çиçĕмлĕ хăвăртлăхпа саварса пычĕ. Пирĕн Чăваш республикинче 1936 çул пуçламăшĕнче стахановецсем 321 çын пулнă пулсан, халĕ 2500 çын ытла шутланат. Мĕн чухлĕ тата стахановецсен ретне тăма хатĕрленсе çитнĕ çынсем — ударниксем, социалисăмла ăмăртса ĕçлесе стахановецă пулма хатĕрленекенсем? Вĕсем пиншерĕн шутланаççĕ.

Социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăм кадрсене воспитани памалли шкул пулса тăчĕç. Вăл шкул мĕлйуншар ĕçсыннисене ĕçе çине социалисăмла пăхма, культурăлла пурăнма вĕрентет. Çĕмĕрле комбинатĕнчи стахановецсем: стоцар П. Иванов, рамщик Орешникăн тата ытти нумай йулташсем нормăна 262 процент таран тултарса пыраççĕ. „Большевик" саватри вышарщик Федăрав, диффузорщик Новожилăв йулташсем нормăна 175 процент тултараççĕ. Кунашкал пысăк тухăçлăхпа ĕçлекенсем кашни савăтра, хапрăкра, ертелте, колхозра пур, вĕсем пур çĕрте те йышлăн шутланаççĕ. Вĕсем техникăна пĕтĕмпех алла илнĕ, пĕрмайах малала утакан тата хăйсем хыççăн рабочисен анлă массине илсе пыракан çынсем.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли кун çинчен пĕлтернĕ — социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăмăн хумне тата та пысăк вăйпа çĕклерĕ. Хапрăк-савăтсенче, колхозсенче, МТС-сенче, стройкăсенче социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăмăн хăвачĕ пысăккăн сутăлчĕ. Рабочисемпе инженерла-техникла работниксем ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, колхозниксемпе колхозницăсем гектартан 100 пăтран кайă мар тыра туса илессишĕн кĕрешĕве тухрĕç. Кашни çĕнĕ кун [illegible] вĕсем илсе килет. Деткомиссин Шупашкарти хапрăкĕ апрелĕн плана 21 кун хушшинче 101 процент тултарнă. „Большевик" савăт коллективĕ Майкопри экстракт савăчĕпе тухнă ăмăртупа мала тухассишĕн кĕрешет. Ĕç хастарлăхĕ, ĕç хавасăхĕ пур çĕрте те, вăйлă шыв тапăн пек, вĕресе тăрат.

Социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăм кун çаван пек вăйлăн çĕкленни — халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планне пур йенĕпе те анăçлăн тултарма майсем паракан пысăк вăй пулса тăрат. Предприяти, хуçалăх организацисен руководителĕсем, партипе совет организацисем, профсоюзсем çак чаплă йухăма вăйлатсах, сарсах пымала тăвас пулат.

Партин Тĕп Комитечĕ „Мускавпа Мускав облаçĕнчи хапрăк-савăтсенчи стахановецсем „чĕнсе каланă" пирки йышăннă постановленийĕнче [illegible] стахановла йухăмăн вăйне массăллă йухăма пулнине кăтартса парат. Массăллăх, — ака мĕнре социалисăмлă ăмăрту тата ун çĕнĕ, çӳлĕ пусăмĕн — стахановла йухăмăн вăйĕ! Стахановла йухăма массăллă йухăм тума, чи малтан, кашни участокра, кашни рабочи, алăстаç ваĵĵи стахановла ĕçлеме лайăх условисем туса пани кирлĕ. Техника вĕренĕве, рационализаципе изобретени ĕçне лайăхлатмала. Пĕтĕм ĕçре çирĕп организаци тумала. Стахановецсен пахă опытне анлăн сармала.

Стахановла йухăма чăн-чăн массăллă йухăм тăвассишĕн кĕрешесси — халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен [illegible] пĕтересси [illegible] мар-и вара?" (Сталин).

Çакна асра тытса социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма хакламаннине хирĕç тăтăклăн кĕрешмелле. Стахановла йухăма чăрмантаракансене пĕр хĕрхенӳсĕр çĕмĕрсе пымала. Стахановецсене ударниксен пĕтĕм массине йĕртсе пырас çулран пăрăнса, çăмăлтарах çул, стахановла рекордсем тăвас çул çине тăнине хирĕç кĕрешмелле.

Чылай предприятисенче, хуçалăх организацисенче социалисăмла ăмăртупа стахановла йухăм массăллă йухăм пулса тăрайман-ха. Уйрăмах стахановла йухăм вăрман хатĕрлекен организацисенче йерпсĕн сарăлса пырат. „Чăвашвăрманпром, Вăрманпромхоз руководителĕсем çав пысăк вăй çине тимсĕр пăхни вăрман хатĕрлев планне тултарассине хăрушлăх умне илсе пычĕ. Стахановла йухăм промысла кооперации системинче, строительствăра та вăраххăн сарăлса пырат. Çавна пула ĕнтĕ çак участоксем хăйсен планне тултарассине кая йулса пыраççĕ. Кунашкал пулнине тӳсме çук.

Социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма пур çĕрте те, пур участкăра та ĕçсен тĕп меслечĕ пулмала тăвас пулат. Паллах, çавнашкал тума тимлĕн ĕçлени кирлĕ.

Иккĕленмели çук, социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма чăн-чăн массăллă йухăм туса сарса йарсан, халăх хуçалăхĕн 1938 çулхи планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртĕпĕр.

Суйлавсене стаханăвла çĕнтерӳсемпе кĕтсе илетпĕр

Шупашкарти „Красный мебельщик" ертел членĕсем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кампани пуçланнине, суйлава ийунĕн 26-мĕшĕнче ирттерме йышăннине пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç.

Суйлав кампани пуçланнă май вĕсем социалисăмла ăмăртăва тата анлăрах сарма пулчĕç. Суйлавсене стахановла çĕнтерӳпе кĕтсе илеççĕ. Сĕтелсем, пукансем, партăсем, шкапсем тумали çурçуллăх плана срукчен тултарма обйазателствă илнĕ.

Революцилĕ сисĕмлĕхе ӳстерсе, хамăрăн ертелре пулнă тăшманла ĕçсен йулашкисене кĕске вăхăтрах пĕтерме сăмах параççĕ. Ертел членĕсем хушшинче агитацилемассăлă политикăлă ĕçе анлăн сараççĕ. Суйлав кунĕ çитиччен РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсемпе суйлав Положенисене ертел членĕсене пурне те вĕрентсе çитерме кружоксем организациленĕ. Суйлав кунĕнче пурте пĕр çын пек пулса, суйлав участкисене кайса, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн хамăр сасăсене паратпăр, теççĕ вĕсем.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен

Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Вăрнар, Çĕрпӳ, Йĕпреç райĕçтăвкомĕсен, Шупашкар хула совечĕн, Вăрнар районĕнчи Уравăш йалсовет, Çĕрпӳ районĕнчи Нĕрĕш йалсовет, Йĕпреç районĕнчи Чăваш Тимеш йалсовет председателĕсен, Вăрнар районĕнчи Çĕрпӳйел йалсовет членĕн Обезйанăв агитатăрăн доклачĕсене тата çав районсенче суйлав кампанине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тĕрĕслени результачĕсем çинчен Тĕпĕçтăвком Президиумĕн инструктăрĕсем пĕлтернисене итленĕ хыççăн, Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çакна палăртат: РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленесси çителĕксĕр пулса пырат тата çав районсенчи руководителĕсем пĕтĕмĕшпех хăйсене хăйсем лăплантарнă. Пулас суйлавсене хатĕрленес ыйтăва райĕçтăвкомсен президиумĕсенче тата пленумĕсенче лартса сӳтсе йавман, çавăн пирки те вырăнсенче суйлава хатĕрленесси пĕтĕмĕшпех хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шаннă. Райĕçтăвкомсемпе йалсовечĕсем ПСК(б)П Обкомĕн VI-мĕш пленумĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленесси çинчен йышăннă решенине пурнăçа кĕртме ĕçсыннисен анлă массисене мобилизацилемен.

Райĕçтăвкомсем суйлавсене хатĕрленесси йалсовечĕсенче мĕнле пыни çинчен пĕлмеççĕ, йалсоветсен ĕçне вĕсем тĕрĕслемен цифăрсем тăрăх çеç хаклаççĕ. Райĕçтăвкомсемпе вĕсен пайĕсем тата районсенчи актив çак чи кирлĕ ĕçре йалсовечĕсене пулăшса пымаççĕ.

Вырăнсенче формалĵнă кружоксем организациленĕ, вĕсен руководителĕсене палăртса хунă, анчах кружоксем нумайĕш ĕçлеме тытăнман, руководителĕсем хăйсен кружокĕсен составне пĕлмеççĕ. Нумайĕш агитатăрсемпе калаçу ирттерекенсен кирлĕ литературă çук (суйлавсене ирттермели Положенисемпе Конституцисем). Вăрнар районĕнче 30 процента йахăн суйлавçăсене, Çĕрпӳ районĕнче 45 процента йахăн суйлавçăсене кружоксене йавăçтарнă тесе шутлаççĕ, анчах тĕрĕсленĕ хыççăн нумай кружоксем ĕçлеменнине палăртнă. Йĕпреç районĕнчи Хурамал йалсоветĕнче 15 кружок организациленĕ шутланат, вырăнта тĕрĕсленĕ чух пĕр кружок та пулманни палăрнă.

Суйлава хатĕрленес тĕлĕшри агитацилĕ-массăлă ĕçе предприйатисене, цеха, рабочисен общчежитисене куçарман (Шупашкарти макарон хапрăкĕ, Вăрнарти фосфорит савăчĕ). Шупашкарти „Кожупряжь" ертелĕн рабочийĕсем пулас суйлавсем çинчен нимĕн те пĕлмеççĕ. Йалти вырăнсенче çак ĕçе колхоз хирĕсенче, бригадăсенче, звеносенче, трактăр бригадисенче организацилемен. Вăрнар районĕнчи Уравăш йалсоветĕнче виççĕмĕш кун акаççĕ, анчах колхозсен хирĕсенче пĕр мĕнле агитацилĕ-массăлă ĕç те çук.

Суйлава хатĕрленес ĕçе черетлĕ хуçалăхла-политикла задачăсемпе çыхăнтарма пултараймаççĕ, çавăн пирки те предприйатисемпе колхозсенче массăлă производствăлла çĕкленӳ тăвайман.

Вулав çурчĕсем суйлава хатĕрленес ĕçре çийакра тăрса йулнă тата вĕсенчен нумайĕшĕ пачах та ĕçлемеççĕ. Вăрнар районĕнчи Çĕрпӳйел йалсоветне кĕрекен Хурисур йалĕнче, Йĕпреç районĕнчи Çĕпĕ Чурашра вулав çурчĕсене вăрлăхсене йаровизацилеме йышăнса илнĕ.

Чăвашсойузпа КОГИЗ суйлав литературипе суту-илӳ тăвассине пурнăçа кĕртеймерĕç. Вăрнарти тата Йĕпреçри йалпосенче вырăсла пичетленĕ „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени", чăвашла пичетленĕ „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положени" çук. РСФСР тата Чăваш АССР Конституцийĕсем те сутлăх çук. Уравăш йалпоĕн магазинĕнче РСФСР Конституцийĕ пĕтĕмпе те 2 екземпĵар кăна пур.

Суйлава Çыхăну управленийĕ хăйĕн районсенчи пайĕсемпе пĕрле начар хатĕрленет. Вăрнар районĕнче 13 йалсовечĕн тата 2 суйлав округĕн телефон çук. Республикăри тата районри хаçатсем, çавăн пекех предприйатисемпе колхозсенчи стена хаçачĕсем те суйлава хатĕрленес ĕçе пачах çителĕксĕр çутатаççĕ.

Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çапла **йышăнат:**

1. Вăрнар, Йĕпреç, Çĕрпӳ тата ытти райĕçтăвкомсене, Шупашкар хула советне РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшри пĕтĕм ĕçе туса ирттернĕ чух ĕçсыннисен пур сийĕсене те тата пур суйлавçăсене те политикăлă агитацине, пропагандăпа (кружоксемпе, лекцисемпе, митингсемпе, пухусемпе, калаçусемпе, вулавсемпе) çавăрса илессине пурнăçа кĕртме, массăлă-политикăлă ĕçе предприйатисенче, колхозсенче, МТС-сенче, учрежденисенче, вĕренӳ заведенийĕсенче, ертелсенче, вăрман пункчĕсенче, çавăн пекех тата суйлавçăсем пурăнакан вырăнсенче туса ирттерме хушас.

Йалти вырăнсенче суйлавсемпе çыхăнулă агитацилĕ ĕçе колхозсен хирĕсенче, бригадăсенче, звеносенче тата трактăр бригадисенче туса ирттермеле.

2. Райĕçтăвкомсене районри, йалсоветсенчи, колхозри активăн тата йалти интеллигенцин чи лайăх вăйĕсене ĕçсыннисем хушшинче калаçусем туса ирттерме, хаçатсем вуласа пама, кружоксенче вĕрентме йавăçтарма хушас.

Хĕрарăм суйлавçăсем хушшинче массăлă-политикăлă ĕçе организацилесси çине, вĕсенчен чи активлăраххисене суйлав агитацилĕ тата организатăрла ĕçе йавăçтарасси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмала.

Агитатăрсемпе пропагандиссен суйлавçăсене пурне те ССР Сойузĕн, РСФСР-ĕн тата Чăваш АССР-ĕн Сталинла Конституцине, çавăн пекех РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене ăнлантарса памала, суйлавçăсене ССР Сойузĕн шалти тата пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăвĕн ыйтăвĕсене тăтăшах ăнлантарса памала, суйлавçăсене пурне те РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне активлăн та организациллĕн хутшăнма политикла хатăрлесе çитерес тĕлĕшпе, класла-тăшмалла елементсем, чиркӳ çыннисем суйлав кампанине хирĕç пуçа çĕкленине тăтăклăн кĕрешсе пымала.

3. Райĕçтăвкомсемпе хула совечĕсене суйлавçăсен ирттнĕ суйлаври списăкĕсене тĕплĕн тĕрĕслесе, суйлавçăсен списăкне суйлав Положенисенче кăтартнă срукра туса çитерессине пурнăçа кĕртме хушас.

4. Райĕçтăвкомсене, хула совечĕсене тата йалсовечĕсене суйлав докуменчĕсене сыхласа усрассине, çавăн пекех помещенисем хатĕр пулассине тата кабинăсене, урнăсене тата ытти оборудованисене типтерлĕ тытса усрассине пурнăçа кĕртме хушас.

5. Райĕçтăвкомсемпе хула совечĕсене округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиссисене чăннипех те малта пыракан çынсене, ĕçсыннисем хушшинче авторитетна тата вĕсем шаннипе усă куракансене, Ленин — Сталин парти ĕçĕшĕн парăнса ĕçлекенсене тăратассине пурнăçа кĕртме хушас.

6. Когиза тата Чăвашсойуза ĕçсыннисене ваĵĵи суйлав литератури тăратма, магазинсемпе йалпосем урлă ĕçсыннисем хушшинче суйлав литературипе анлăн суту-илӳ тăвассине организацилеме хушас. Чăвашсойузăн радиоточкăсене пурне те питани парас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмала.

7. Чăвашгиза планпа чăвашла пичетлеме палăртнă суйлав литературине вăхăтра кăларма хушас.

8. Йалсоветсене телефонсем тата радиосыхăну йĕркелесе парассипе начар ĕçленине палăртса, Çыхăну управленине суйлав округĕсемпе суйлав участкисенче пуринче те телефонсем лартассине пурнăçа кĕртме хушас. Çыхăну управленине округсенчи суйлав комиссисемпе Тĕп Суйлав Комиссийĕ хушшинче йĕрколĕ, пĕр лармавсăр телефонпа сыхăнмала тăвас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас.

9. Радиокомитета суйлавçăсем хушшинче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленес ыйтăвĕсемпе массăлăн радио итлессине организацилеме хушас.

10. Республикăри, районсенчи хаçатсене вырăнсенче суйлава хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен тăтăшах çутатса пыма тата предприйатисемпе колхозсенчи стена хаçачĕсене пулăшса пыма хушас. Хаçатсен страницисенче чи лайăх ĕçлекен райĕçтăвкомсен, хула совечĕсен, йалсовечĕсен суйлава хатĕрленес тĕлĕшри опычĕсене, чи лайăх ĕçлекен агитатăрсен, вулавçăсен, калаçу ирттерекенсен ĕçне çутатса пымала.

11. Сутĕç Халăх Комиссариатне тата райĕçтăвкомсене вулав çурчĕсен суйлава хатĕрленес тĕлĕшри ĕçне тăтăклăнах лайăхлатма, вулав çурчĕсен РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ вăхăтри ĕç планĕ çинчен кăтартусем пама хушас.

Сутĕç Халăх Комиссариачĕн органĕсем вырăнсенче хут çĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туманнине палăртса, Сутĕç Халăх Комиссариатне тата районсенчи сутĕç пайĕсене хут пĕлмен суйлавçăсене суйлав кампани вăхăтĕнче хута вĕрентессине пурнăçа кĕртме хушас.

12. Райĕçтăвкомсене ПСК(б)П Обкомĕн VI-мĕш пленумĕн решенийĕсене тата Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн çак постановленине сӳтсе-йавас тĕлĕшпе пур йалсовечĕсенче те вĕсен анлă пленумĕсене ирттерме хушас.

13. Пур райĕçтăвкомсене те, хула совечĕсене тата йалсовечĕсене пулас суйлавсене хатĕрленессинчи кăтартнă ситменлĕхсене тăтăклăнах пĕтерме, ПСК(б)П Обкомĕн VI-мĕш пленумĕ йышăннă решени тăрăх вырăнсенче суйлава хатĕрленес ĕçе тăтăклăнах лайăхлатма, вăл ĕçе хуçалăхла-политикла задачăсемпе çыхăнтарса, ĕçсыннисен анлă массисен политикла тата производствăла çĕкленĕвне тăвассине, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене большевикла ирттерессине пурнăçа кĕртме хушас.

Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ З. АНДРЕЙЕВА.

Чăваш АССР Еçтăвакан Тĕп Комитет çекретарĕ Т. ВАÇИЛИЕВ.

Шупашкар хули.
1938 çулхи апрелĕн 25-мĕш.

Рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн кĕрешекенсене суйлатпăр

Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служăшчисен митингĕнче йышăннă резолюцирен

Епĕр, рабочисем, работницăсем, инженерла-техникла работниксем тата служăшчисем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ çинчен йышăннă постановленисене хĕрӳллĕн саламлатпăр.

Суйлав кунĕнче — ийунĕн 26-мĕшĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене тăван çĕршывăн лайăх ывăл-хĕрĕсене, „сылтăмла-троцкисла блок" йулашкийĕсемпе, йапун-герман шпионĕсемпе, диверсантсемпе, пирĕн çĕршывра капиталисăм йĕрки туса хума ĕмĕтленнĕскерсен йулашкийĕсемпе кĕрешме пултаракансене тата вĕсене пĕтĕмпех тăпăлтарса тăкма пултаракансене суйлатпăр, тесе халăхсен çулпуçне Сталин йулташа сăмах паратпăр.

Епĕр, хамăрăн тăван коммунисла парти чĕннипе РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен пĕрлĕхлĕ, хăватлă блокне тата ытларах çирĕплетме пулатпăр.

Хамăрăн Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленнĕ май, епĕр, Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисемпе работницăсем, инженерла-техникла работниксем, служăшчисем цехсем, бригадăсем хушшинчи социалисăмлă ăмăртăва тата вăйлăн сарса ыратпăр. Стахановла ĕç йухăмне массăлă йухăм тăватпăр. Суйлава производствăри çĕнĕ çĕнтерӳпе, çур çул планне тултарнипе тухатпăр.

Сывă пултăр РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнчи коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ!

Сывă пултăр ПСК(б) Партин Сталинла Тĕп Комитечĕ!

Сывă пултăр халăхсен çулпуçĕ тата учителĕ Сталин йулташ!

□○□

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕшĕн

ÇĔМĔРЛЕ. (Телефон тăрăх). Кунта комбинатри рабочисемпе инженерла-техникла работниксен пысăк митингĕ пулчĕ. Суйлав кампани пуçланнă йатпа ирттернĕ митинга 2000 çын ытла пухăнчĕç.

Пурте пĕр сасăпа йышăннă резолюцире рабочисем, служăшчисем тата инженерла-техникла работниксем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, социалисăм ĕçне чĕререн парăннă çынсемшĕн сасăласси çинчен калаççĕ.

Кун хыççăнах Çĕмĕрле хулинчи мĕн пур предприйатисемпе учрежденисенчи комсомолĕцсемпе сойузра тăман çамрăксен 2000 çынлă митингĕ пулса иртрĕ.

С. Йалавин.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Йалта налогпа страховкă тӳлевĕсене йалсенчи прихут-расхут кассисем тата районри финанс пайĕсен вырăнсене тухса çӳрекен кассисем урлă, йалсенчи перекет кассисемпе участкăсенчи инспектăрсем урлă пухас йĕрке налогпа страховкă тӳлевĕсене парас тĕлĕшпе йалти халăхшăн кансĕрлĕхсем тата чылай йăвăрлăхсем туса хурат, çавăн пекех тата вăл йĕрке государствă интересĕсене пурнăçа кĕртсе пыма çителĕклĕ мар.

Йалсенче налогпа страховкă тӳлевĕсене пухас ĕçе лайăхлатас шутпа, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ районсенчи финанс пайĕсенче налог агĕнчĕсем пулмала тунă, вĕсем çине йалсенче пурăнакан халăхран налогпа страховкă тӳлевĕсене пухас ĕçе хунă.

Налог тӳлевĕсене пухакан агĕнт пĕр-пĕр йалсоветĕнче кăна ĕçлет. Хăшпĕр чухне налог тӳлевĕсене пухакан агĕнта икĕ йалсовет территорине пама пултараççĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ налог агĕнчĕсен ĕçукçи ставкисене туса çирĕплетнĕ. Ставкăсем çапла пулаççĕ: уйăха 150 тенкĕрен пуçласа 250 тенке çити, çав агĕнт çӳрекен çĕрте хуçалăхсен хисепне тата вăл пунктсем инçетрине сывăххине шута илнĕ тăрăх пулмала. Йалсоветĕнче 1.000 хуçалăх пур пулсан, ун пек йалсовечĕсенче кашни налог агĕнчĕ çумĕнче налог агĕнчĕн помошникĕ пулат.

Налогпа страховкă тӳлевĕсене инспектăрсем, вырăнсене тухса çӳрекен кассăсем, районри финанс пайĕсен йалсенчи прихут-расхут кассисем урлă пухассине çак çулхи ийунĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пăрахăçа кăлармала тунă.

* * *

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕсен инспектăрĕсем вырăнне Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕн государствăна йалхуçалăх продуктисем тăратас тĕлĕшпе ĕçлекен агĕнчĕсене тумала тунă, вĕсем çав хăйсем çӳрекен участкăри йалсенчен пĕринче йаланах пулмала.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕн продуктăсене сутăн илсе хатерлес тĕлĕшпе ĕçлекен инструктăрсен штатне пĕтермеле тунă, вĕсене государствăна памалли продуктăсене пухас тĕлĕшпе ĕçлекен агентсем тумала тунă.

Продуктăсене йышăнакан пунктсене, вĕсене çав продуктăсене паракансем патне çывхартас шутпа, ССР Сойузĕн Апатсимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссариатне заготскотпа ăш-какай хатĕрлевĕн хал вăхăтлăха тунă 600 базине (районта урăх база çук çĕрте) йаланлăхах хăварма тата вĕсен çумне хушса хатĕрлев базисене çĕнĕрен 360 тума хушнă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНӐÇӖ

Çураки тата тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтри йалти партилӗ-массӑлӑ ӗç çинчен

ПСК(б)П Чӑваш Обком бӳровӗ 1938 çулхи апрелӗн 9-мӗшӗнче йышӑннӑ

ПОСТАНОВЛЕНИ

ПСК(б)П райком çекретарӗсен тата МТС директӑрӗсен политика йенӗпе ӗçлекен заместителӗсен ПСК(б)П Обкомӗ çумӗнче пулса иртнӗ канашлавӗ нумайӗш парторганизацисем ССР Союзӗн Верховнӑй Совет суйлавӗсене ирттернӗ хыççӑн массӑсем хушшинчи партилӗ-политикӑлӑ ӗçе чӑтма çук вайсӑрлатнине кӑтартса панӑ. Партипе комсомолӑн тата партире тӑманнисен нумай йышлӑ — суйлавсем вӑхӑтӗнче ӳснӗ активне парти организацисем çирӗплетсе хӑварман, йулнисемпе те вӗсен политикӑлӑ пӗлӳне малала ӳстерсе пырас тӗлӗшпе тата куллентхи хуçалӑхлӑ-политикӑлӑ задачӑсем тавра массӑлӑ-политикӑлӑ ӗçе йавӑçтарас тӗлӗшпе нимӗн те ӗçлемеççӗ. Партипе комсомол пропагандисӗсем пропаганда ӗçне — вӗренӳ планӗн тивӗçлӗ темисем тӑрӑх заңатисене колхозсенче, совхозсенче тата МТСтанцисенче сӑтӑрла ӗçсен йулашкийӗсене пӗтерес таткӑлӑ задачӑсемпе çыхӑнтармаççӗ, çапла вара теорилӗ вӗренӗве — вырӑнсенчи партипе совет, суту-илӳ т. ыт. организацисем чи кирлӗ хуçалӑхлӑ-политикӑлӑ задачӑсене пурнӑçа кӗртес задачӑсенчен уйӑраççӗ.

Çаксем пурте ӗнтӗ чи кирлӗ хуçалӑхлӑ-политикӑлӑ чылай кампанисем тӑрӑх (укçа-тенкӗ пуçтарасси, аш-какай тата сӗт-çу тӑрасси, вӑрман хатӗрлевӗ, натурплата) чылай районсене прорыва кӗрсе йуласси патне илсе пычӗç. Çавӑн пекех тата çуракине хатӗрленес ӗçре те пысӑк çитменлӗхсем пур. Шӑхасан районӗнчи „Свет“, „Победа“, Чапайӗв йачӗпе тӑракан колхозсенче виçӗ республика (Чӑваш, Тутар тата Мордва АСС Республикӗсем) хушшинче туна социалисӑмлӑ ӑмӑрту догӑвӑрне ку таранчен çитсе те сӳтсе-йавман, Канаш, Патӑрйел тата Йелчӗк районӗсем 1937 çулхи тырпула пайанхи кунччченех çапса валеççе пӗтермен, çав районсенчи МТС-сем тракторӑриссене, комбайнӗрсене тата бригадирсене ӗçукçи те тӳлесе татман.

Пӑрачкав, Канаш, Çӗрпӳ тата ытти чылай МТС-сенче тракторӑрисем, бригадирсем, комбайнӗрсем, тата механиксем хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗçе тӳсме çук йапӑх туса пыраççӗ.

Çак МТС-сенчи пуçламӗш парторганизацисем 1937 çулта пӗр çынна та партие илмен. Республикӑри нумайӗш колхозсенче йалхуçалӑх ертелӗн сталинла уставне пысӑккӑн пӑснисем ку таранччченех пулса пыраççӗ.

Халӑх тӑшманӗсем — фашисӑмӑн троцкисла-бухаринла тата буржуалӑ-националисла агӗнчӗсем парти организацисен çакӑн пек тимсӗрлӗхӗпе тата вӗсем массӑсем хушшинчи партилӗ-политикӑлӑ ӗçе вайсӑрлатнипе усӑ кураççӗ, чылай вырӑнсенче йалхуçалӑх ертелӗн уставне массӑлӑн пӑсма, колхоз пурлӑхне вӑрласа çӗратса пӗтерме хаҙ те провокаци тӑваççӗ, çапла тунипе колхоз строительствине сийен кӳреççӗ.

ПСК(б)П Облӑç Комитечӗн бӳровӗ: республикӑри çакӑн пек ларӑ-тӑру вӑл парти организацисемпе вӗсен руководителӗсен хуçалӑхлӑ йе политикӑлӑ кампанисемпе хӑрахйенлӗн касса кайма йураманни çинчен, ку тата урӑх задачӑсене пӗр-пӗринпе çирӗппӗн çыхӑнтарса пыма кирли çинчен. Сталин йулташ пӗр хут мар кӑтартса панисене парти организацисемпе вӗсен руководителӗсем ку таринччченех ӑнланса илменнипе пулнӑ, тесе шутлать. Вӗсем ПСК(б)П Тӗпкомӗн февраҙ-мартри Пленумӗнче Сталин йулташ çакӑн пек уççӑн кӑтартса панисене манса кайнӑ: „Пирӗн партири йулташсем хуçалӑх ӑнаçӑвӗсемпе касса кайса, политикӑран пӑрӑнса пыни — ку вӑл пире хакла ларнӑ хӑрахйенлӗх пулнӑ. Халӗ пирӗн хӑшпӗр йулташсем вара, партилӗ-политикӑлӑ ӗçе вайлатма тытӑнса хуçалӑхран пӑрӑнма шухӑш тытсан, — ку вӑл тепӗр хӑрахйенлӗх пулӗ, вӑл ӗлӗкхинчен кайа ламӗ. Пӗр йенчен тепӗр йенне кайса çапӑнма йурамаст. Политикӑна хуçалӑхран уйӑрма йурамаст. Епӗр политикӑран пӑрӑнма пултарайман пекех, хуçалӑхран та пӑрӑнма пултараймастпӑр“.

ПСК(б)П Облӑç Комитечӗн бӳровӗ çапла йышӑнать:

1. ПСК(б)П райкомӗсене тата мӗн пур парторганизацисене. Сталин йулташ кӑтартӑвӗсем тӑрӑх тата ПСК(б)П Обкомӗн VI-мӗш пленумӗн решенийӗсем тӑрӑх йалта партилӗ-массӑлӑ ӗçе таткӑлӑнах вайлатма тата çӳлте кӑтартнӑ мӗн пур çитменлӗхсене пӗр сӑмахсӑрах кӗске срукра пӗтерме хушас. ПСК(б)П Обкомӗ, çуркуннехи тата çуллахи вӑхӑтра йалти политикӑлӑ-массӑлӑ ӗçӗн тӗп содержанийӗ — виçӗ республика (Чӑваш, Тутар тата Мордва АСС Республикӗсем) хушшинче тунӑ социалисӑмлӑ ӑмӑрту догӑвӑрӗнчен тухса тӑракан хастарлӑ задачӑсене мӗн пур колхозниксене, трактӑриссене, комбайнӗрсене тата йалхуçалӑх специалисӗсене сарлакан, тӗплӗн ӑнлантарса парасси, çав ӗçе йертсе пыракан парторгӑнсен суйла вӗсене, РСФСР Верховнӑй Совечӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совет суйлавӗсене ирттерес, Чӑваш АСС Республикӗн 1938 çулхи халӑх-хуçалӑх планне тултарас задачӑсемпе тата колхозсем, йединоличниксем, МТС-сем, совет, суту-илӳ тата ытти организацисем государствӑ умӗнчи хӑйсен мӗн пур обйазательствисене (йалхуçалӑх хатӗрлевӗсем, вӑрман хатӗрлевӗсем, укçа-тенкӗ пухасси т.ыт.) тултарас задачӑсемпе çыхӑнтарса пырасси пулать, тесе шутлать, çак ӗçе агитатӑрсем, калаçу ирттерекенсем тата вулавçӑсем туса партипе комсомол активӗн йышлӑ сийӗсене, йалти интеллигенцине, вырӑнта ӗçлекен советпа колхоз активне т.ыт те йавӑçтармала.

2. Парти райкомӗсене, çак ӗçе агитатӑрсем, вулавçӑсем тата калаçу ирттерекенсем пулса ӗçлеме лайӑх тӗрӗсленнӗ коммуниссене, комсомолӗцсене, йалти интеллигенцине тата активлӑ колхозниксемпе колхозницӑсене, Ленин—Сталин парти ӗçне вӗçнӗ çитийех парӑннӑ тата стлинла сӑмаха массӑсем патне илсе çитерме пултаракан çынсене суйласа тупса, агитацилӗ ӗçе лайӑхрах йӗркелесе йама вӗсемпе татӑшах инструктивлӑ канашлусем туса ирттерме хушас.

3. Çураки тата тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра парторганизацисен политикӑлӑ-массӑлӑ ӗçӗнче уйра бригадӑсенче, звеносенче, трактӑр отрйачӗсенче ӗçлесси тӗп вырӑнта пулмала. ССР Союзӗн Верховнӑй Советне суйланӑ чухне пулнӑ массӑлӑ-политикӑлӑ ӗçӗн пӗтӗм лайӑх опычӗпе усӑ курмала: группӑсенче калаçусем ирттерни, хаçатсене сапла вуласа пани, ыйтусемпе ответсен вечӗрӗсем, агитбригадӑсем, радио, кино, мӗнле ӗçленине кӑтартакан хӑмасем, производствӑлӑ кӗске канашлусем, колхозсенче тата бригадӑсенче стена хаçачӗсем кӑларни, — çапла тунипе 1938 çулхи вайла тырпулшӑн мӗн пур бригадӑсемпе звеносенче социалисӑмла ӑмӑртӑва анлӑн сармала. Çакна шута илсе ПСК(б)П райкомӗсен, колхозсенчи, МТС-сенчи парткомсемпе парторгсен тата МТС директӑрӗсен заместителӗсен çураки тата тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтри партилӗ-массӑлӑ ӗçӗн планне туса хатӗрлемеле, вӑл плана, партипе комсомолӑн кашни пуçламӗш организацине, кашни коммунис, комсомолӗц, агитатӑр, калаçу ирттерекен тата вулавçӑ патне çитермеле.

4. Çураки тата тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра партилӗ-массӑлӑ ӗçӗн центрне уй-хире куçарса, çав вӑхӑтрах йала тата колхоз анкартисене йулакан колхоз членӗсем хушшинчи, çавӑн пекех тата йединоличниксен хуçалӑхӗсем хушшинчи ӗçе те вайсӑрлатмала мар. Колхоз клубӗсенче, вулав çурчӗсемпе хӗрлӗ кӗтессенче куҙтурӑлӑ-массӑлӑ ӗçе пысӑккӑн сармала, çак ӗçе районри тата йалти мӗн пур куҙтурӑлӑ вайа йавӑçтармала, колхозри вулав çурчӗсемпе клубсем çук çӗрте ССР Союзӗн Верховнӑй Советне суйланӑ вӑхӑтра вунӑ килсем тата çирӗм килсем тӑрӑх ӗçленӗ агитатӑр-колхозниксен ӗç опычӗпе пысӑккӑн усӑ курмала, ку опыт пӗтӗмпех вырнаçулӑ пулни курӑнчӗ.

Чӑваш радиокомитечӗне Çыхӑну управлени уполномоченнайне çураки тата тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра колхозсенчи радиоточкӑсем пӗр татӑксӑр ӗçлемеле тума хушас.

5. Парти Обкомӗ райкомсене тата партипе комсомолӑн мӗн пур пуçламӗш организацийӗсене çакӑн çине çавӑрӑнса пӑхтарать: тырпул тухӑçлӑхне ӳстерессишӗн, йулса пыракан колхоз емпе районсене мӑлтисемпе танлаштармала тӑвассишӗн болҙшевикла кӗрешесси парти организацисемпе уйрӑм коммуниссем ӗçӗн стаханӑвла метӑчӗсене йалхуçалӑх ӗçӗсене анлӑн кӗртсе пынӑ никӗс çинче тата пӗтӗм звено, бригадӑ, колхоз тунӑ çитӗнӳсене çирӗплетсе хунӑ никӗс çинче хӑйсен руководствипе тата коммуниссемпе комсомолӗцсен хӑйсен примерӗпе уй-хирте, колхозсенче, МТС-сенче социалисӑмла ӑмӑртӑва мӗнле пуçарса пыма пӗлнинчен те килет.

6. Парти райкомӗсемпе пуçламӗш парторганизацисен колхозниксен йышлӑ массисене колхозсенчи сӑтӑрлӑ ӗçсен йулашкийӗсене пӗтерес, йалхуçалӑх ертелӗн сталинла уставне çирӗппӗн пурнӑçа кӗртсе пырас тӗлӗшпе таткӑлӑ кӗрешӗве мобилизацилемеле. „Пирӗн задачӑ акӑ мӗнре пулать: йалхуçалӑх ертелӗн уставне пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑçа кӗртсе пырса, колхознике колхоз стройӗн çимӗçӗсемпе туллинрех усӑ курма май памала, ӑна хресчене тулах çимӗçсем, пуйан та куҙтурӑлӑ пурнӑç кӳрекен колхозсен пӗтӗм вайне туйса илме памала“. („Правда“, 1937 çулхи августӑн 8 мӗш).

7. Республикӑри, районсенчи тата савӑтсенчи хаçат редакцисен колхозсенчи партилӗ-массӑлӑ ӗçе пичет урла анлӑн çутатса пырассине организацилемеле, çураки тата тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра колхозсемпе бригадӑсенчи стена хаçачӗсене кӑларма кунсерен практикӑлӑ пулӑшу памала.

8. Парти организацисен, советсен, колхозсен çураки тата тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра колхозниксене колхозницӑсене тата трактӑриссене куҙтурӑпа йала тӗлӗшӗнчен пулӑшса тӑрассине организацилемеле, çавна валҙҙи ача площадкисем, йаçлесем, пӗрле апатланас ӗçе организацилемеле, уй-хирте куҙтпалаткӑсем тумала, унта йаланах çӗнӗ хаçатсем, журналсем, кӗнекесем, шахмӑтсем, шашкӑсем пулмала, радио лартмала. Колхозниксемпе трактӑриссен канунӗ тата пушӑ вӑхӑтне лайӑх организацилени çуракине тата тырпулсене пухса кӗртессине ӑнаçлӑн ирттермелли чи кирлӗ услови пулса тӑрать.

9. ПСК(б)П Обкомӗ партин мӗн пур организацийӗсене колхозсенче, бригадӑсенч, уй хирте, звеносенче политикӑлӑ-массӑла ӗçе тата пӗтӗм халӑх хушшинче массӑлӑ социалисӑмлӑ ӑмӑртупа стаханӑвла йухӑма анлӑн сарса пынӑ никӗс çинче 1938 çулта Чӑваш республикӗнчи кашни колхоз гектартан 100 пӑтран кайа мар сталинла тырпул туса илмеле тума тата виçӗ республика ӑмӑртӑвӗнче: Тутар, Мордва тата Чӑваш АСС Республикӗсен ӑмӑртӑвӗнче Чӑваш АСС Республикине малти вырӑна кӑлармала тума чӗнет.

ПСК(б)П Обкомӗн çекретарӗ

Г. ИВАНОВ.

Ӗçӗн резуҙтатне кура хакларӗç

Кашни парторганизацин политикӑлӑ ӗçе хуçалӑх ыйтӑвӗсемпе тӗрӗс çыхӑнтарса ӗçлемеле. Çакна Чӑвашсойуз çумӗнчи пуçламӗш парторганизаци çителӗксӗр пурнӑçласа пынӑ.

Парти организаци суту-илӳ ӗçне кӗрсе кайнӑ троцкисла-бухаринла бандитсене, буржуалӑ-националиссене тӑрӑ шыв çине кӑларса вӗсене аппаратран тасатас йенӗпе пысӑк ӗçсем туса ирттернӗ. Çав хушӑрах троцкисла-бухаринла бандитсем тата вӗсен агӗнчӗсем тунӑ сӑтӑрла ӗçсен йулашкийӗсене суту-илӳ ӗçӗнче хӑйулӑн тата хӑвӑрт пӗтерсе пырасси, совет граждӑнӗсем валҙҙи куллен кирлӗ таварсене çителӗклӗ кӳрсе килесси çаплипех сӳрӗккӗн пулса пыраççӗ. Иртнӗ суйлавра парторг Çергейӗв: 1937 çул Чӑвашсойуз системинче растратӑ питӗ сахал пулать, тесе тунӑ тунӑ пулсан, Чӑвашсойуз 1938 çула пӗр мӗлйун та 400 пин тенкӗ таран растратӑпа кӗнӗ. Чӑвашсойуз аппаратӗнче ӗçлекен коммуниссем кооперативсене йӳрӑхсӑр стемсенчен, растратчиксенчен, пурлӑха çаратакансенчен тасатас ӗç çине тӗплӗн çавӑрӑнса пӑхман. Суту-илӳ системинче пайанччченех тӑшманла, сийенлӗ ӗçсем пулса пыраççӗ. Йалсенче час-часах уйӑх-уйӑхӗпе тавар, сахӑр, спичкӑ, махоркӑ тата çупаҙ пулмасть. Çав таварсене илме колхозниксен 10—15 километр таран айакка кайса çӳреме тивет. Кунашкал çитменлӗхсем камран килнине Çергейӗв йулташ хӑйӗн отчотлӑ докладӗнче каласа памарӗ.

Парти Тӗпкомӗн иртнӗ çулхи февраҙ-мартри Пленумӗ болҙшевисӑма вӗренсе алла илесси çинчен кӗрешӳлӗ лозунг кӑларса тӑратрӗ. Çав задачӑна пурнӑçа кӗртме парторганизацисем чи малтан парти вӗренӗвӗн ӗçне пит тимлӗн туса пымала. Анчах, Чӑвашсойуз çумӗнчи парторганизацийӗ ку йенӗпе те мухталмалийех çук.

— Çергейӗв йулташ доклачӗ тӑрӑх, епӗ политзаҙатисене лайӑх вӗренсе пыратӑп мӗн. Ку тӗрӗс мар. Чӑн та, заҙатисене епӗ пӗр сиктермесӗр çӳретӗп, анчах заданисене пур чухне те лайӑх хатӗрленсе кайаймастӑп. Ку тӗлӗшпе парторг Çергейӗв хӑйӗн докладӗнче илемлетсе каласа пачӗ, — тет Лӳминарскайа йулташ.

Тихӑнӑв йулташа, пассивлӑ тесе, парти членӗнчен кандидата куçарнӑ. — Купшӑн епӗ ӳпкеленместӗп, анчах мана кандидата куçарнӑ хыççӑн та вӗренӳре пулӑшакансем çук, вӗренӳре йулса пыратӑп, — тет Тихӑнӑв йулташ.

Çак тӗслӗх, парторгсен уйрӑм кружоксем мӗнле ӗçлесе пынине пӗлнипех лӑпланса ларма йураманнине, вӗсен кашни коммунис мӗнле вӗренсе пынине пӗлсе тӑма, кашни коммуниса уйрӑмӑн хӑйӗн идейлӑ-политикӑлӑ пӗлӳне хӑпартма пулӑшса пыма кирли çинчен калать.

Парти поручениисене коммуниссем мӗнле пурнӑçласа пынине çийӗнчех тӗрӗслесе пыни кирлӗ. Вӑл коммуниссем хушшинчи дисциплинӑна хӑпартать, ӗçлеме вӗрентет. Ӑна та парторганизаци тивӗçлипе пурнӑçласа пыман. Хӑшпӗр коммуниссене (пухӑва чӗннисӗр пуçне) парти ӗçне йавӑçтарсах та кайман. Акӑ, ку тӗлӗшпе Çтепанӑв йулташ мӗн калать:

— Комсомолра чухне епӗ хамӑн пӗлӗве куллен ӳстерсе пыма пултарнӑ. Халӗ, парти кандидатне кӗнӗреппе, хам ӳсме пынине сисместӗп. Парторг мана поручени памасть. Капла пурӑнма, уйрӑмах ман пек çамрӑксене, питӗ кичем.

Парторг Çергейӗв йулташ хӑйӗн отчотлӑ докладӗнче парторганизаци ретне мӗншӗн ӳсменнин сӑлтавне тӗплӗн кӑтартса памарӗ. — Парти йышӗ ӳсменни вӑл парторганизаци ӗçлеменнинчен килнӗ, тесе ответ парать. Анчах, прение тухса каланӑ коммуниссем парторганизаци мӗнле сӑлтавсене пула ӳсменнине таткӑлӑн кӑтартса пачӗç. Парти ретне ӳстермели резервӑ пысӑк. Чӑвашсойузра ӗçлекен рабочисем 40 çын ытла. Вӗсем хушшинче стаханӑвӗцсемпе ударниксем те сахал мар. Комсомол организаци пур. Анчах, вӗсем хушшинче партилӗ-массӑлӑ ӗçе питӗ çителӗксӗр туса пынӑ. Сочувствуйушчипе тӑракан Федӑрӑв йулташпа никам та ӗçлемест, халӗ вӑл ниçтата вӗренмест. Лаврентийӗв йулташ парторганизаци комсомолпа питӗ сахал ӗçлени çинчен каласа пачӗ. Комсомол хушшинче ӗçлеме уйӑрса çирӗплетнӗ Каҙаканӑв йулташ парторганизаци хушнӑ ӗç çине тимлӗн пӑхман, комсомолӗцсен пухӑвне çӳремен, вӗсене ӗçре пулӑшу паман. Парторг Çергейӗв йулташ та пайанхи куна комсомол организацинче миçе комсомолӗц тӑнине тӗрӗссипе каласа пама пултараймасть. Парторганизаци массӑпа тачӑ çыхӑнса ӗçлемен пирки 1938 çула кӗнӗреппе пӗр çын та партине кӗрекен пулман.

Чӑвашсойузри парторганизаци умӗнче хаҙхи вӑхӑтра тӑракан задачӑсенчен пӗри — вӑл суту-илӳ ӗçӗнче ӗçлекенсем хушшинче политикӑлӑ воспитани ӗçне тӗпренех сӗнетсе, лайӑхлатса йарасси, парти ретне комсомолӗцсен, стаханӑвӗцсен, ударниксен шучӗпе ӳстерсе пырасси, халӑх тӑшманӗсем тунӑ сӑтӑрлӑ ӗçсен йулашкисене тӗпӗпех пӗтерме хастарлӑ ӗçлесе пырасси пулать.

Парторг отчочӗ тӑрӑх, прение тухса каланӑ коммуниссем парторганизаци ӗçӗнчи çитменлӗхсене хӑйулӑн критиклерӗç, малашне мӗнле ӗçлемелли çинчен лайӑх сӗнӳсем парса хӑварчӗç. Пуху парторганизаци ПСК(б)П Тӗпкомӗн иртнӗ çулти февраҙ-мартри Пленумӗпе çак çулти йанвар уйӑхӗнче пулса иртнӗ Пленумӗн решенисене пурнӑçлас йенӗпе çителӗклӗ таран ӗçлемен, тесе хак парса хӑварчӗ.

А. Григорйӗв.

Райком инструктӑрӗсем парторганизацисенче сахал пулаççӗ

Çак кунсенче Кӗлӗмкассинчи „Хӗрлӗ фронтовик“ (Йӗпреç р.) колхозри парти пуçламӗш организацин пухӑвӗ пулса иртнӗ. Çав пухура ПСК(б) Парти райкомӗн çулталӑк хушшинчи ӗçӗсем çинчен доклад туса панӑ. Райком отчочӗ тӑрӑх, прение тухса калаçнӑ коммуниссем парти райкомӗ коммуниссене партирен кӑларнӑ чухне пысӑк йанӑшсем тунине палӑртнӑ. Парти райкомӗ йалсенчи коммуниссене политикӑлӑ воспитани парас пирки тӑрӑшсах ӗçлемен. Политзаҙатисем пулнӑ кунсенче часчасах пропагандиссене райкома чӗнсе кайнипе заҙатисене ирӗксӗрех урӑх кунсене куçармала пулнӑ. Парти райкомӗн инструктӑрӗсем парти пуçламӗш организацийӗсенче сахал пулаççӗ. Акӑ, сӑмахран, „Хӗрлӗ фронтовик“ колхоз çумӗнчи парти организацинче 1937 çулти декабӗр уйӑхӗнчепе райком инструктӑрӗсем пырса курӑнман.

Прение тухса калаçнӑ коммуниссем парти райкомӗ йенчен йертсе пырассине вайлатма, райком работникӗсен ытларах парти пуçламӗш организацийӗсенче пулса, вӗсене ӗçре пулӑшса пыма хушса хӑварнӑ.

Ф. Захарӑв.

Памӗтник

„Хӗрлӗ сӑрт“ çинчи хура чӳлтан купаланӑ памӗтник çумӗнче Прохӑр старикпе Ваҙкӑ йатлӑ çамрӑк шахтӑр калаçса лараççӗ. Прохӑр старик ватӑлнӑ ӗнтӗ. пӗр 60—65 çулсенче пур пуҙ: çӳçӗ шап-шурӑ, тӑрӑхла питçӑмартийӗсем çийӗнче шыв çурса кайнӑ пек пӗрӗнчӗксем, сарлака çамки урлӑ тахçанхи суран. Прохӑр хӗрӗх çул çак шахтӑра ӗçленӗ. Нумай курнӑ, нумай илтнӗ, нумай тӳснӗ, нумай пӗлет. Кӑçал Прохӑр старике ӗç паттӑрӗн йатне панӑ.

Чылайччен калаçса ларсан:

— Ав, пӑх-ха, Прохӑр пичче, мӗн чухлӗ халӑх килет кунтала йалавсемпе, — терӗ Ваҙкӑ, ури çине тӑрса пӑхса.

— Апла... Куратӑп, ачам. Аса килеççӗ иртнӗ кунсем. Анчах... — терӗ Прохӑр, хашт сывласа илсе. Вӑл сылтӑм аллине куçӗ умне тытрӗ, хӗвел йалтрипе вут пек йалкӑнакан хӗрлӗ йалавсем çине пӑхрӗ.

— Прохӑр пичче, кирлӗ мар хуйхӑрма, уйав вӗт... Ав, куратни... — терӗ çамрӑк шахтӑр, старик сумне сынӑхарах ларса.

— Çук, ачам... Вӑл кунсене манма çук... Йавӑр, асаплӑ кунсем, — терӗ Прохӑр старик. Унӑн куççӗсем улма пек çаврака, тӑра шыв пек таса пулсан та, мӑчмӑч хупӑнса тӗксӗмленчӗç.

— Мӗншӗн пит хурлансa асӑнатӑн вара çав тахçӑн иртсе кайнӑ ӗçсем çинчен? — терӗ Ваҙкӑ, старикӗн куççуҙҙе тӗксӗмленнӗ куççенчен шӑтарас пек пӑхса.

— Ех, ачам, ӗлӗкхи пурнӑç пирӗншӗн пурнӑç пулман, — тамӑк! Итлӗ, еппин, каласа парам. Халиччен никампа та калаçманччӗ. Саншӑн, саншӑн анчах, — хуллен калама пуçларӗ Прохӑр. — Çав çулхи майӑн пӗрремӗш кунӗ ман асран виличчен те тухас çук. Унтан вара 30 çул иртнӗ ӗнтӗ. Есӗ илтетни-и?..

— Илтетӗп, илтетӗп, Прохӑр пичче. Кала, кала малала. Мӗн пулнӑ вара вӑл çул? — тата старик сумнерех сынӑçса ларчӗ çамрӑк шахтӑр.

— Мӗн пулнӑ? Епӗ унчух сан пекех çамрӑк, пӗр 24—25 çултаччӗ. Çамрӑк йун вӗрет. Вӑй нумай, çамрӑк вӑйа ниçта хума тӗл тупмастӑн. Ӗçлетӗн лаша пек. Камшӑн, мӗншӗн ӗçленине, чухласа илеймен. Анчах ерех ӗççе ӳсӗрӗлсе, çапкаланса çӳремен. Çавӑнпа мана хам йулташсем кирек хӑçан та мухтатчӗç, йуратап чӗç.

Унчух хаҙхи пек клубсем, театрсем, киносем, хӗрлӗ кӗтессем çукчӗ, вӗсем вырӑнне чиркӳ, хунаҙ тата ытти ирсӗрлӗхсемччӗ. Каçсенче улаха кайаттӑмӑр. Унта хӗрсем пуçтарӑнатчӗç. Пӗр Марук йатлӑ хӗрпе йурлаттӑмӑр вара, танлаттӑмӑр. Куççӗсем ун ӑшшӑн пӑхатчӗç, кӑвак шӑрçа пек çутӑлса тӑратчӗç.

Çуркунне çитсен вара, çак „Хӗрлӗ сӑрт“ çине пуçтарӑнса выҙаттӑмӑр. Пуринчен ытла кунта майӑн пӗрремӗш кунӗ халӑх нумай пуçтарӑнатчӗ. Томск хулинчен студентсем, рабочисем килӗтчӗç, Револҙуци çинчен каласа ӑнлантарса паратчӗç. Епӗ хам кӑшт чухланӑ. Нумайӗшӗ нимӗн те пӗлместчӗç. Çапах та студентсем калапине итлеме пуçтарӑнатчӗç. Студентсем пире револҙуци çинчен çырнӑ кӗнекесем пара-пара хӑваратчӗç. Епӗр вӑл кӗнекесене полицейскисем курмала мар вырӑнсенче ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пуçтарӑнса вулаттӑмӑр. 1905 çулччен çак „Хӗрлӗ сӑрт“ çине пуçтарӑнма пит чарсах каймастчӗç. Анчах 1905 çулхи майӑн пӗрремӗш кунӗнчен вара, сыхла пуçларӗç. Вӑл кун маншӑн ӗмӗр асӑнмала пулса йулчӗ. Маншӑн анчах мар, пӗтӗм ӗçхалӑхӗшӗн.

Çав çулхине майӑн пӗрремӗш ыран тенӗ чухне, шахтӑ хуçи патӗнчен приказ килчӗ. Приказ çине: „Майӑн 1-мӗшӗнче ӗçлемеле“, — тесе çырнӑ. Шахтӑрсем унӑн приказне пӑхӑнмарӗç: каçхи çменӑна та, ирхи çменӑна та тухмарӗç. Гудок пушар тухнӑ чухнехи пек сухӑрчӗ-сухӑрчӗ те, лӑпланчӗ.

Ирхине, хӗвел пайанхи пекех хӗрелсе тухрӗ. Шахтӑрсем карçинкӑсемпе ӗçмелли-çимелисем йатса, çак „Хӗрлӗ сӑрт“ çинелле утрӗç. Епӗр те Марукпа килтӗмӗр. Вӑл вӑхӑтра епӗр унпала арлӑ-арӑмлӑ пурӑнаттӑмӑр. Пирӗн пӗр Ваҙук йатлӑ ывӑл ача çуралнӑччӗ. Ӑна кукамӑшӗ патне хӑвартӑмӑр. Тухса кайнӑ чух иксӗмӗр те ӑна тыта-тыта чуптурӑмӑр. Пирӗн 6 уйӑхри ача сӑнкара пӗчӗк тутисене култарса, алли-урисемпе танкаланса, пӗчӗк çавракa куççӗсемпе тинкерсе пӑхса вырта йулчӗ.

„Хӗрлӗ сӑрт“ çинче шахтӑрсем тулли йех. Пуринчен ытла çамрӑксем нумай. Хӑшӗ хуткупӑс калать, хӑшӗсем ташлаççӗ, хӑшӗсем йурлаççӗ. Калама та çук пысӑк савӑнӑç. „Хӗрлӗ сӑрт“ çийӗ йантраса çеç тӑрать.

Çапла пӗтӗм чунтан савӑнса майӑн пӗрремӗшне кӗтсе илетпӗр. Çасартӑк тап-тӑрӑ уйар пӗлӗт хурала пуçларӗ. Ӑна çӑмӑр пӗлӗчӗ хупласа илчӗ. Хӗвел курӑнми пулчӗ. Шӑпӑртатса çӑмӑр çума пуçларӗ. Хуларан килнӗ студент кӑвак картусне хывса пирӗн йенелле пуçне тайрӗ. Малтан кӗнекесем салатса пачӗ. Унтан пӗр йавӑç тункати çине улӑхса тӑчӗ те:

— Йулташсем! — пурне те илтӗнмеле кӑшкӑрчӗ вӑл. Сасси вӑрман тӑрӑх йантраса кайрӗ. Вӗлле хурчӗ пек сӗрлекен халӑх шӑп пулчӗ. Вӑрӑм тунасем йайлатса вӗçни çеç илтӗнет.

— Пайан майӑн пӗрремӗшӗ — пӗтӗм тӗнчери ӗçлекенсен праçникӗ! — пуçласа йачӗ студент хӑйӗн сӑмахне. — Пайанхи кун епӗр хамӑр вайа пӑхма пуçтарӑннӑ. Револҙуци тӑвас ӗç вӑл, çӑмӑл ӗç мар. Капиталиссем пире тӗрлӗ майпа хӗстереççӗ. Анчах пӗтӗм вӑй ӗçхалӑх аллинче! Пирӗн вӗсене хирӗç тухмала. Анчах пӗччен-пӗччен мар, пурсӑмӑрӑн та харӑс хускалас пулать. Пире капитал пусмӑрӗнчен никам та çӑлас çук. Епӗр хамӑра хамӑр çеç çӑлӑнма пултаратпӑр!..

Унччен те пулмарӗ, тӗрлӗ йенчен полицейскисем пырса та тухрӗç: хӑшӗ йуланутпа, хӑшӗ çуран, — пирӗн патала васкавлӑн сывхараççӗ.

— Стой! Перетпӗр! — тенӗ сасӑ йантраса кайрӗ.

Шахтӑрсем пӗр çӗреле чӑмӑртана пуçларӗç. Студент картусне тӑхӑнчӗ те:

— Йулташсем!.. — Сыхланӑр! — тесе кӑшкӑрчӗ. Хӑй çавӑнтах тунката çинчен сиксе анса халӑх хушшине кӗрсе кайса курӑнми пулчӗ. Студент сӑмахне илтсен, купаланса тӑракан шахтӑрсем тӗрлӗ йенелле чӑлпар саланса пӗтрӗç.

— Стой! Сволӑчсем! — сасӑсем йантра пуçларӗç. Çавӑнтах пӑшал сассисем кӗрлесе кайрӗç. Таракан шахтӑрсем хӑшӗ чупнӑ çӗртех чӑсӑла-чӑсӑла ӳкеççӗ, хӑшӗ куклене-куклене лараççӗ, хӑшӗ мерле çавӑрӑнса выртаççӗ. Йавӑррӑн ахлатса сывлани, кӑшкӑрашни таврана хупласа хучӗ.

Епӗ нимӗн тума пӗлмесӗр, йупа пек хытса кайнӑ та, пӗр вырӑнта тӑратӑп. Çаврӑнса пӑхрӑм та, манӑн Марук курӑнмасть — тарнӑ. Унччен те пулмарӗ, хай студент вӑрман хушшинчен сиксе тухрӗ те:

— Сыхлан йулташ, мӗн пӑхса тӑратӑн, тар хӑвӑртрах! — тесе кӑшкӑрчӗ. Кӗсйинчен кӗске пӑшал туртса кӑларса, хӑй патнелле сиктерсе пыракан полицейскине тӗллесе печӗ. Лешӗ çавӑнтах лаши çинчен кӗлте пек сирпӗнсе анчӗ. Студент полицейски лаши патне чупса пычӗ те, сиксе утланчӗ. Курса анчах йултӑм: пӗр минут хушшинче вӑрман ӑшнелле сиктерсе кӗрсе курӑнми те пулчӗ.

Епӗ те вӑрманала кӗрсе кайрӑм. Çаврӑнса пӑхмасӑр чупатӑп. Сисмен те, хыçран пӗр йуланут чуптарса çитсе, пуç урлӑ нухайкӑпа ахлатса çапрӗ. Куçран çиçӗм çиçнӗ пек йалтӑр-йалтӑр вут хӗлхемӗсем тухса сирпӗнчӗç. Куççем хуралса кайнипе, пӗр каска çине такӑнса ӳкрӗм. Полицейски урӑх çапаймарӗ, лашипе ман урлӑ сиктерчӗ.

Чылай выртсан ӑн кӗчӗ. Çамка вутпа пӗçертнӗ пек пӗçерсе ыратать. Алӑпа тытса пӑхрӑм, пуç йӗп-йӗпе йун. Çамка тирӗ пуртӑпа касна пек иҫ йеннелле уйӑрӑлнӑ. Тӑтӑм та, çири кӗпене çурса пуçа чӗркесе çыхрӑм. Унтан каллех, полицейскисен аллине лекес мар тесе, вӑрман хушшине васкаса кӗрсе кайрӑм. Чӑтлӑх вӑрман. Хӑранипе ӳнтала-кунтала пӑхкаласа пыратӑп. Йавӑç тураттисем питрен çат та çат çапаççӗ. Çамка тӳсмеле мар ыратать. Çӑмӑр чашлаттарса çӑвать, кӗмсӗртетсе аслати аватать, йалтӑр та йалтӑр! çиçӗм çиçет. Ура айӗнчи çӗр чӳхенет. Таçта айакра шартлаттарса аçа çапать. Çил урса тулать. Ухра та, хыçра та кӗреслетсе йавӑçсем йӑванаççӗ. Никам та каласа ӗненес çук, тӗнче пӗтес вӑхӑт çитнӗ пек туйӑнать.

Чупсан-чупсан пӗр уçланкӑ хӗрне çитсе тухрӑм. Пӑхатӑп, манран инçе те мар, пӗр хӗрарӑм çӳçне-пуçне тустарса, йӑванса выртать, çийӗнчи кӗпи йунпа пӗвеннӗ. Курсанах чӗре йӗппе [illegible] нӗ пек ыратса кайрӗ. Тӳсеймерӗм, патне чупса пытӑм. Умне лӗржуçленсе ларса пуçне çӗклесе питӗнчен пӑхрӑм. Ах, вӑл хӗрарӑм Марук пулчӗ. Вилеймен. Епӗ пуçӗнчен тытсан куçне майӗпен уçса:

— Прохӑр, есӗ-и ку... Вӗлерчӗç... Ах... Ах, Ваҙука, Ваҙука... йулать, — терӗ вӑл аран сеç илтӗнен йаваш сассипе.

Çӑмӑрпа йӗпеннӗ çӗре аллисемпе чӑмӑртаса тытса, куççӗсене майӗпен хупса хучӗ. Вара сывлӑшӗ пӗтрӗ. Марукӑн пуçне хам алӑ çинче тытса чылайччен шухӑшла кайса лартӑм. Çамка ыратни те сисӗнми пулчӗ. Анчах ун вырӑнне чӗре вут пек çунать. Тӳсеймерӗм, хурланса йӗрсе йатӑм. Тӗттӗм пула пуçласан Марукӑн ӳтне киле илсе тавӑрӑнтӑм. Майӑн иккӗмӗш кунӗнче тирпейлесе пытартӑмӑр. Çапла, ачам... Вӑл кун çак „Хӗрлӗ сӑрт“ çинче мӗн пурӗ 25 çынна вӗлерчӗç. Аманнисен хисепне пӗлместӗп. Ку памӗтник çав 25 çынна асӑнса лартнӑскер. Ак çак, ман çамка çинчи йӑрӑм — çавӑнтан йулнӑ паллӑ.

Çак вӑхӑтра шахтӑрсем хӗрлӗ йалавсене вӗлкӗштерсе, йурӑсем йурласа, памӗтник патне çитсе чарӑнчӗç.

— Акӑ, епӗр кӗтнӗ çутӑ кунсем çитрӗç. Ленин—Сталин йалавӗ пӗтӗм тӗнчене коммунисӑм патне илсе çитерӗ! — терӗ Прохӑр.

Демонстраци кӗрлет.

М. Н. Данилӑв-Чалдун.

1938 ÇУЛХИ ÇУРАКИ

Çураки ĕçĕнчи стахановецсем

ПАТĂРЙЕЛ. (Телефонпа). Апрелĕн 26-мĕшне районĕпе 2.609 гектар акнă. Колхозсем вăрлăхсене йаровизацилесе акни вăйлă тырпул туса илес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине иртнĕ çулхи опытсем тăрăх лайăх сăнарĕç. Кăçал вĕсем çак ĕçе тĕплĕн туса иртерессишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Пĕтĕм лаптăк çине йаровизациленĕ вăрлăхсемпе акса хăварассишĕн кĕрешеççĕ. Колхозсем 7 200 центнер вăрлăх йаровизациленĕ.

Май уйавĕ умĕнхи ăмăрту вăйланса пырат, колхозниксемпе колхозницăсем май уйавне çуракине пысăк пахалăхпа иртернипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Стахановецсен йышĕ кунран кунах ÿссе пырат. „Çăлтăр" колхозри В. Пласкин колхозник нормăпа 1,5 гектар сухалас вырăнне 2 гектар, Г. Перепелкин колхозник 2,10 гектар сухалат. П. Перепелкин норма тăрăх 6 гектар сÿрелес вырăнне 11 гектар сÿрелет. Г. Кудрйашов 11 ретлĕ çейăлкăпа йалан ах 8,5 гектар, Рыбаков 8 гектар çурă акат.

„Хĕвелтухăç" колхозра та çавнашкалах колхозниксем ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Й. Дмитрийĕв, В. Петров колхозниксем 2-шер гектар сухалаççĕ.

„Трактăр" колхозра Н. Творăгăв, С. Петров колхозниксем 1,80 шер гектар сухалаççĕ. В. Андрейĕв 11 ретлĕ çейăлкапа кулленех 7,5-шер гектар акса пырат.

Хăшпĕр колхозсенче мăнкуна уйавлани ĕçе чăрмантарат. Апрелĕн 26-мĕшĕнче „Хĕрлĕ Патăрйел" колхозра правлени председателĕ Рубцов тата бригадир Одинокăв ÿсĕр пулнă. Çавнашкалах çейăлкапа ĕçлекен Сидăрăв, Рубцов колхозниксем ÿсĕр пулнă пирки çейăлкăпа ĕçлемен, Çав кун 7 лаша уйа ĕçлеме тухман.

„Ленинская победа" колхоз председателĕ мăнкун кунĕнче уйра ĕçлекенсене ĕçкунĕ икĕ хут ытларах лартса пама пăхнă. Çак çитменлĕхсене çийĕнчех сиссе тÿрлетнĕ.

Райçĕрĕç пайĕн аслă агрономĕ **А. ФЕДĂРĂВ.**

„Малала" колхозра

ТРАК. (Телефонпа). Именĕври „Малала" колхозăн çуракинче 250 гектар акса хăвармала. Вăл шутран апрелĕн 27-мĕшне лашасемпе 80 гектар, тракторсемпе 25 гектар сухаланă.

Çураки ĕçĕнче таваттăмĕш тата пиллĕкмĕш бригадăсем палăрса тăраççĕ. Пиллĕкмĕш бригадăри 65 çулхи Г. Петров колхозник плугпа сухалас нормăна кулленех 150 процент тултарса пырат. Çак бригадăрах И. Васильев колхозник нормăна 4 гектар вырăнне 6 гектар сÿрелет. Н. Рышкова А. Семенова 11 ретлĕ çейăлкăпа кулен 7 гектар акса пыраççĕ.

Колхоз вăрлăхсене вутпуçĕсен тасатса, йаровизацилесе акат.

Бригадăсенче политвулавçăсем хаçат-журналсем вуласа параççĕ. Колхозниксем уйрах РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренеççĕ.

А. Краснов. М. Иванов.

ПАНĂ САМАХА ПУРНĂÇЛАÇÇĔ

ШАХАСАН. Атнашри Кирăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсем, кăçал республикăри пур колхозсене, колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе каласа, йалхуçалăх çулĕнче малти вырăна тухассишĕн кĕрешме пулчĕç. Вĕсем Ушанарти Калинин йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртăва тухрĕç. Халĕ Кирăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен сăмахне ĕçре пурнăçласа пыраççĕ. Çуракине чăннипех аван хатĕрленсе тухрĕç.

Çĕр пиçсе çитсенех, апрелĕн 22-мĕшĕнче, 6-мĕшпе 8-мĕш бригадăсем акана тухрĕç. Апрелĕн 23-мĕшĕнче В. Çтепанăвă йертсе пыракан 1-мĕш бригадă та акана тухрĕ. Акара бригадăсем, колхозниксем ăмăрту йалавне çÿлте тытса пыраççĕ. Апрелĕн 24-мĕш кунĕнче колхозăн ытти бригадисем те акана тухрĕç.

Кашни колхозник хăйĕн ĕçне тăват: хăшĕсем тислĕк тата торф салатаççĕ, хăшĕсем сÿре патĕнче. Пайанхи куна 178 центнĕр вăрлăх йаровизациленĕ, 68 гектар çинчи ыраш калчине апат панă. Кĕрхи сĕртме тунă вырăна 115 гектар сÿреленĕ.

Анташ колхозникĕсем май уйавне тĕштырăсем акса пĕтернипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

В. Черпов.

Агротехника ĕçĕсене вăхăтра тата пахалăхлă тумала

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Апрелĕн 26-мĕш тĕлне районра 19 колхоз çуракине тухнă. Çураки ĕçне Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз уйрăмах лайăх туса пырат. Хĕл вăхăтĕнче хатĕрленĕ тислĕкпе, кĕлпе, торфпа, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе тĕплĕн усă кураççĕ. 40 гектар кĕр калчине тислĕк шĕвекĕпе апат панă. 50 гектар сÿреленĕ. Колхозри бригадăсем йаровизациленĕ вăрлăхсемпе акса хăварассишĕн тăрăшаççĕ. Халь 36 центнĕр вăрлăх йаровизациленĕ, çĕрулми вăрлăхне те йаровизацилесе хунă.

Ишлей районĕнче кĕрхи калчасене апат парассипе сÿрелесси кайа йулса пынине палăртса хăвармала. Апрелĕн 26-мĕшне мĕн пурĕ те кĕрхи калчасене 592 гектар сÿреленĕ, 300 гектар апат панă. Хăшпĕр колхозсем çак агротехникăлла ĕçсем çине çийĕлтен пăхаççĕ.

Районĕпе тĕштырă вăрлăхне 1934 центнĕр йаровизациленĕ, 202 центнĕр çĕрулми вăрлăхне йаровизацилеме хунă.

П. Грошĕв.

Культмассăлла ĕçе лайăх туса пыраççĕ

Тренйалĕнчи (Патăрйел р.). „Октабĕр йалавĕ" колхоз кăçали çуракине анаçлăн, пысăк пахалăхпа иртерсе пырат. Ку вăхăтчен 132 гектар ытларах сухаланă. Вăл шутран 80 гектар çинче суртлă вăрлăхсемпе акса хăварнă.

Колхозри пахалăх комиççи кашни кунхи ĕçсене тĕрĕслесе хаклаçа пырат. Комиççи хакланă тăрăх, колхозра çураки ĕçĕсем пахалăхлă пулса пыраççĕ. Ку йенĕпе пĕррĕмĕш бригадăна палăртса хăварас пулат. Ку бригадă пур ĕçре те малта пырат, ĕçсене йаланах пысăк пахалăхлă тăват.

Колхозра пĕрлешÿллĕ столовăй ĕçлет. Бригадăсенче культмассăлла ĕçсене лайăх туса пыраççĕ. Политвулавçăсем колхозниксене Совет Союзĕнчи ĕçсем çинчен, капиталисла çĕршывсенче пулса пыракан хыпарсем çинчен ăнлантараса пыраççĕ. Бригадăсенче кашни кунах стена хаçачĕсем кăларса тăраççĕ.

Н. Квасăв.

Ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшмаççĕ

КАНАШ, апрелĕн 27-мĕшĕ (телефон тăрăх). Вырăскас Пикшикри „Мотор" колхоз çураки ĕçне апрелĕн 23 мĕшĕнчех тухрĕ. Акана тухаччен колхоз председателĕ район умĕнче „епĕр пур йенчен те çуракине хатĕрленсе çитнĕ", — тесе мухтанчĕ. Халь кунта акана тухни 6 кун çитрĕ пулин те 195 гектар çеç сухаланă. Çапла ÿрĕксĕр ĕçлесен колхозăн тата 6 кун сухалама çитет.

Колхозăн производствăлла планĕ тăрăх пĕрчĕллĕ тырăсене 8 кун хушшинче акса пĕтермеле. Кунта нимрен ытла сухаласа хăварнă çĕре сÿресси кайа йулса пырат. Тыра акмали машинăсемпе усă курма пĕлмен пирки алăпа акаççĕ.

Хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче лашасене лайăх пăхмала, вĕсене вăхăтра тăрантармала, шăвармала. Апла пулин те Никандрăв, Иванов, Викгăрăв конюхсем ĕçлесе килнĕ лашасене пĕр кас çĕрĕпех выçă тăратнă.

Кунта акмали вăрлăхсене вутпуç сирен çитĕлĕклĕ тасатман. Бригадăсенче нимĕнле культмассăлла ĕç те çук. Стена хаçачĕсем тухмаççĕ, республикăра тата районта тухакан хаçатсене çырăнса илмен. Бригадăсенче хаçат вулакансене уйăрман.

А. Нестĕрăв.

Çейăлкăсене ĕçсĕр лартаççĕ

ЙĔЛЧĔК. (Телефонпа). Май уйавĕ çывхарса килнĕ май, колхоз уйхи ĕçсене ăмăртса ĕçлесси сарăлса пырат. Краçилникăв коммунис йертсе пыракан „Новочурино" колхозра К. Йермаковăпа Шмолкинă колхозницăсем 2,40 шер гектар сухалаççĕ.

Ленин йачĕпе тăракан колхозра Виноградăвăпа Обрушков йулташсем 11 ретлĕ çейăлкăпа 10-шер гектар акаççĕ, Чернов 6 гектар вырăнне 12 гектар сÿрелет.

Хăшпĕр колхозсенче çейăлкăсемпе акассине хакламаççĕ. „Коммунис", „Пахарь", „Çĕнĕ çул", Дзержинский йачĕпе тăракан колхозсенче çейăлкăсем пур пулин те алăпа акаççĕ.

Нормăсене тултарса пыраççĕ

ПАТĂРЙЕЛ. (Телефонпа): Тусари „Çăлтăр" колхоз çураки ĕçĕсене хĕрÿллĕ туса пырат. Ку колхоз, Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкине пулма тивĕçлĕх илнĕскер, выставкăна тата пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешет. Апрелĕн 24-мĕшĕ тĕлне кĕрхи сĕртме тунă уйа 529 гектар тата 40 гектар кĕрхи калчасене сÿреленĕ.

104 центнĕр ытларах тула, 158 центнĕр ытларах сĕлĕ йаровизациленĕ. Колхоз кăçал йалтах йаровизациленĕ вăрлăхсемпе акса хăварат.

Апрелĕн 24-мĕшне колхоз 74 гектар сĕлĕ, 55 гектар тула, 8 гектар урпа, 19 гектар вика утăлăх акнă.

Плугăсемпе сухалакансем нормăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Нормă тăрăх, икĕ касăла плугăпа 1,5 гектар сухалмала пулсан В. Пласкин 2 гектар, Перепелкин 2,10 гектар, А. Кузнецов 1,85 гектар сухалат.

Нормăпа 6 гектар сÿремелле пулсан, Перепелкин 11 гектар, Д Рыбков 10 гектар сÿрелеççĕ. Çейăлкăсемпе ĕçлекенсем те хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Д. Рыбков колхозник 8 гектар çурă акат. Унтан М. Перепелкин та йулмаст, çавăн чухлех акат.

Н. Пушкин.

Пур колхозсем те акара

Шăхасан. (Телефонпа). Çĕр пиçсе çитрĕ. Апрелĕн 26-мĕш тĕлне районри пур колхозсем те çуракине тухнă. Апрелĕн 24 мĕшне кĕрхи калчасене 456 гектар апат панă, кĕрхи калчасене 500 гектар ытларах сÿреленĕ. Вăрлăхсене 2.400 центнĕр йаровизациленĕ.

Çураки ĕçĕнче Ухманри „Çенгерÿ" колхоз ытти колхозсенчен малта пырат. Кунта 60 гектар сухаласа тĕштырă акнă.

Шăхасан районĕнчи колхозсенче çĕрулмине йаровизацилеме хывас ĕç çине çийĕлтен пăхаççĕ. Çавăнпа ку ĕç ытти ĕçсенчен кайа йулса пырат.

А. Польаков.

Килсем умне шыв лартрĕç

Йантушри (Çĕрпÿ р-нĕ) „Çамрăк вăй" колхозра пушартан сыхланас ĕçе йĕркелерĕç. Пушарпа кĕрешекен ирĕклĕ дружина начальникĕ Охотникăв йулташ тăрăшнипе йалта пушар сарайĕ тунă. Халĕ дружина членĕсем пурте йĕркелен хурал тăраççĕ. Çак кунсенче дружина членĕсем килĕрен çÿресе кăмакасемпе трупасене тĕрĕслесе тухрĕç. Начар кăмакасене йусама хушрĕç. Пушарсенчен сыхă тăрас шутпа кашни кил умнех пысăк катка-пичкесемпе шыв лартрĕç. Урам хушшисене шăлса тасатрĕç.

В. Башмаков.

„Епĕр миршăн тăратпăр, епĕр мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанинчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансен тапăнăвĕ çине тапăнупах ответ пама хатĕр тăратпăр" (Сталин)

(ПСК(б)П Тĕпкомĕ 1938 çулхи Майăн 1-мĕшне иртерме панă лозунгсенчен)

Тăван çĕршыв умĕнче хĕрлĕ приçагă пама хатĕрленетпĕр

Ĕçсыннисен аслă праçникĕ—Майăн 1-мĕш çывхарса килет. Епĕр, 1915–1916 çулсенче çуралнă çамрăксем иртнĕ кĕркунне Хĕрлĕ Çара килнĕ красноармейĕцсем, Майăн 1-мĕшĕнче хамăрăн хаклă тăван çĕршыв умĕнче хĕрлĕ приçагă паратпăр. Хĕрлĕ приçагă вăл красноармейĕцшăн чи çирĕп сак кун. Приçагăра красноармейĕц хамăрăн Совет правительствипе коммунисла парти умĕнче, пĕтĕм çĕршыв умĕнче çар техникине лайăх вĕренсе пыма, çар дисциплинине çирĕп пăхăнса пыма, çар вăрттăнлăхĕсене çирĕп сыхласа усрама, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăнакансемпе пĕр хĕрхенÿсĕр кĕрешсе пыма пулса чаплă сăмах парат.

Епĕр, Белоруççи Çар Округĕнчи № часĕнчи красноармейĕцсем, Майăн 1-мĕшне хĕрÿлĕн хатĕрленетпĕр, уйава пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илетпĕр. Чăсре уйав умĕнхи ăмăрту сарăлса пырат. Чăваш красноармейĕцсем—Замикăв, Платонăв, Ананйев, Иванов, Сазанăв, Федăрăв тата Коротков йулташсем пур предметсемпе те „отличнă" паллăсем илчĕç.

Красноармейĕц **Ф. Сазанăв.**

Çитĕнÿсемпе кĕтсе илетпĕр

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи №-лĕ батальйон пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн праçникне пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илет. Апрел уйăхĕнче уйав йачĕпе стахановла уйăхлăх иртсе пырат. Халĕ кашни ротăпа рота, взводпа взвод, отделенипе отделени, бойецпа бойец социалисăмлă ăмăрту догăвăрĕсем турĕç. Догăвăрта уйрăмăнах политикăпа тата вăрçă техникине отличнă вĕренмелле, дисциплинăпа тата ытларах ÿстермелине кăтартнă.

Стахановла уйăхлăхăн малтанхи кунĕсенчех ăмăрту догăвăрне пурнăçа кĕртме тытăнчĕç. Акă, Мильухин, Жевйак, Аничкăв, Суржан, Голубь т. ыт. йулташсем те, политикăпа вăрçă техникине вăтам вĕренсе пынăскерсем, пайанхи кунра отличнă вĕренеççĕ. Çавăн пекех, Сидăрăв, Царев, Кÿсмин т. ыт. йулташсем, лайăх паллăсемпе вĕренсе пынăскерсем, халĕ лайăх паллăсем илеççĕ.

Кунран кунах çĕнĕ çитĕнÿсем тăватпăр.

Красноармейĕц **М. Архипăв.**

Педучилищă хатĕрленет

КАНАШ. Педагогика училищинче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем, техникăла служăщисем май уйавне хĕрÿлĕн хатĕрленеççĕ. Училищăри харпăрхăй пултарулăх кружоксем те уйава хавассăн кĕтсе илеççĕ.

Хор кружокĕ ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă чухне Канаш хулинчи пур учрежденисенче те тенĕ пекех концертсем лартса панă. Халь май уйавĕнче пысăк концерт пама хатĕрленет.

Драма кружокĕ уйав тĕлне икĕ пйеса лартат, пĕр пйессине шефа илнĕ колхозра, теприне училищăра.

Литература кружокĕ уйав йачĕпе литературă журналĕн „Юный литератор" йатлă уйрăм номĕрне кăларат.

Фото кружокĕ фото-хаçатпа фото-витринă хатĕрлесе çитерет.

П. Николайĕв.

КĔСКЕН

■■ **Студентсем производствăлла практикăра.** Апрелĕн 23-мĕшĕнче Çĕрпÿри фельдшерсен шкулĕнче III-мĕш курсра вĕренекен 60 студент республикăри пульницăсене уйăх çурăлăх производствăлла практикăна тухса карĕç.

Практикăран таврăнсан ийунĕн 12-мĕшĕнче государствăлла зачотне параççĕ.

Г. Солин.

■■ **Осоавиахимăн çамрăк тусĕсен кружокĕ.** Алексейевкăри (Йĕтĕрне р.) „Хĕрлĕ çăлтăр" колхоз çумĕнче Осоавиахимăн çамрăк тусĕсен кружокĕ организацилерĕç. Халь кружок членĕсем Ворошилăв пек тĕл перекенсен тата ПВХО значоксен нормисене пама вĕренеççĕ.

Ф. Краснов.

■■ **Çĕнĕ клуб.** Кăпас йалсоветĕнчи (Тутаркас р.) „КИМ" колхоз 500 çын вырнаçмалăх клуб туса çитерчĕ. Клуба майăн 1 мĕшĕнче уçаççĕ, уйав йачĕпе „Йуратури прорыв" пйесăна лартаççĕ.

Çавнашкалах тата „КИМ" колхоз аш-какай хатĕрлевĕн Чăваш кантурĕпе аш-какай пама догăвăр туса автомашинă туйанчĕ.

Й. Атачкин.

Займ кампанинчи ответлă ĕç

Çак апрел уйăхĕнче пур учрежденисенче, предприйатисенче тата ытти организацисенче те „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займ" илме çырăннисене апрелĕн 2-мĕш çур уйăхĕшĕн ĕç укçи панă чухне займ укçине пухса пĕтермеле. Перекет кассисенчен облигацисене илсе, вĕсене займ илме çырăннисене валеçсе памала. Çак пĕтĕм ĕç пысăк организацилĕхпе пулса иртме тивĕç. Ĕçе пĕтĕм общественнăç, чи малтан государствă кредичĕпе перекет ĕçне пулăшакан комиççисем хутшăнни кирлĕ.

Ĕçсыннисене займ облигацийĕсем парассине пысăк тимлĕхпе туса иртермеле. Займа илме çырăнакан малтан мĕнле облигацисем илме çырăннă—çавсене илме тивĕç. Учрежденисенчи, предприйатисенчи тата ытти организацисенчи администрацисемпе бухгалтерисен çавсене шута илсе ĕçлес пулат.

Иртнĕ çулсенче займ облигацине ăна çырăнакансене парас ĕçре йанăшсем пулнă. Займ çырăнакансем çине ответсăрла пăхнипе пула, пĕр Шупашкар хули тăрăх кăна, иккĕмĕш пилĕкçуллăх займăн 4-мĕш кăларăмне займ çырăнакансене 38 пин тенкĕлĕх валеçсе паман. Ку займ облигацийĕсене çак çулхи ийунĕн 1-мĕшĕччен валеçсе пĕтермесен çырăнакансем вăл облигацисене алла илеймеççĕ.

Кăçал облигацисене çырăнакансене парас ĕçе тĕплĕн иртермеле. „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займ" тăрăх малтанхи вылйавсем çак çулхи ийунĕн 5—6-мĕшĕсенче пулаççĕ. Çакна шута илсе, „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займ" облигацисене çырăнакансене парас ĕçе вăхăтра туса иртермеле. Государствă кредичĕпе перекет ĕçне пулăшакан комиççисем займшăн укçа пухнине, займ облигацисене алла панине йаланах тĕрĕслесе тăмала, ĕçре пулăшса пымала. Çавăн пекех облигацисене çырăннă çынсене мĕнле те пулсан алла парайман пулсан, вăхăтра перекет кассисене тавăрса памала.

Государствă кредичĕпе перекет ĕçне пулăшакан комиççисен тата бухгалтерисен чысла ĕçĕ—облигацисене вăхăтра алла парасси, займшăн укçа пухса пĕтересси пулат.

Кирилăв.

Хайăр сараççĕ

ÇĔРПÿ. Кăшаркассинчи „Пионер" колхозăн çулйĕр бригадинче 10 çын. Бригадă членĕсем кăçал çулйĕр строительствинче лайăх ĕçлеме пулса пĕр-перинпе социалисăмла ăмăртăва тухрĕç.

Бригадă шывсем кайнă вăхăтра чылай ĕçсем турĕ, шыв каймали вырăнсене усса йарса тăчĕ. Хальхи вăхăтра бригадă йал таврашĕнчи çулсем çине хайăр сарма пуçларĕ.

Техника тата стахановла йухăм

Рабочисен пурнăçĕ тĕпренех лайăхланчĕ, пирĕн патра експлоатаци çук, çĕнĕ техника пурнăçа кĕчĕ тата рабочисемпе работницăсен çĕнĕ кадрĕсем ÿсрĕç. Çак никĕс çинче çуралнă стахановла йухăм халăх хуçалăхĕн пур участкисене те, Совет Сойузĕн пур районĕсене те пысăк хăвăртлăхпа çавăрса илсе, массăлă йухăм пулса тăчĕ.

„Унăн пахалăхĕ, тенĕ Сталин йулташ стахановецсен Пĕтĕм Сойузри пĕррĕмĕш канашлăвĕнче,— чи малтан, вăл социалисăмла ăмăртун çĕнĕ çекленĕвĕ, социалисăмла ăмăртун çĕнĕ çÿлти сыпăкĕ пулнинче".

Çак чаплă стахановла йухăм, ССР Сойузĕн халăх хуçалăхĕн пур участкисенчи пекех, Чăваш республик промышленнăçĕнче те анлă хумпа сарăлчĕ, халĕ те сарăлса пырат. 1936 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн республикре стахановецсем 321 çын пулнă пулсан, 1938 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне (тулли мар çеведĕнисем тăрăх) 2500 çын шутланат.

Стахановецсем хăйсен ĕç техникине алла çавăрса илнĕ, ĕç условисене, станоксене тата ĕçĕн лайăх меслечĕсене вĕренсех пыраççĕ. Ĕç тухăçлăхне рекордлăн ÿстереççĕ. Вĕсем пирĕн çĕнĕ техника çинĕ социалисăмла пăхма кирлине вăхăтра тата тĕплĕн ăнланса илнĕ. Çавăнпа çĕнĕ нормăсене йаланах лайăх пахалăхпа тулли пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çĕмĕрле комбинатĕнчи столярсем В. Хомлĕв, П. Иванов, гнутар — Савелйĕв, рамшчик — Орешникăв тата ытти нумай йулташсем çĕнĕ нормăна кулен 200 процентран пуçласа 264 процента çити тултараççĕ.

Çĕмĕрлери „Большевик" саватри стахановец тимĕрçĕ Закальабин, выгрузчик Денисăв, выпаршчик Федăрăв тата ыт. те нормăна йаланах 120—175 процент тултараççĕ. Канашри вакунсем йусакан саватри стахановецсем: Забавин—300 процент, Алексейĕв—250 процент, Карпенка—250 процент таран тултараççĕ. Кунашкал пысăк тухăçлăхпа ĕçлекенсем кашни предприйатирех вуншарăн шутланаççĕ.

Çĕнĕ нормăсене ытлашшипех тултаракансем промысла кооперацин промышленнăçĕнче те сахал мар. Шупашкарти Ленин йачĕпе тăракан ертелти Хорошилăвă, Макарăвă, Улатăрти „Красная швея" ертелĕнчи Маркăвă тата ытти нумай йулташсем нормăна йалан 183 процент таран пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Çаксем вĕсем çĕнĕ кадрсем, çаксем вĕсем çĕнĕ çынсем „хăйсен ĕçĕн техникине пĕтĕмĕшпех алла илнĕ, техникăран мĕн хĕссе сăрхăнтарса илме май пуррине пĕтĕмпех илме пултаракан çынсем" (Сталин).

Стахановла йухăмра хамăрăн социалисăмла çĕршыва чĕререн парăнса ĕçлекен çамрăксем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Тулли мар çевĕденисем тăрăх 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне стахановецсен ретĕнче 25 çула çитменнисем 1500 çын шутланнă, вĕсенчен комсомолĕцсем 700 çын пулнă. Чи лайăх комсомолĕц стахановецсем: Истомин, Лудкова, (Куславкка комбиначĕ), Галейĕв (Çĕмĕрле комбиначĕ), Потапăв, Зульайĕв („Большевик" савăт) т. ыт. те техника екзаменне „отлично", „хорошо" пана хыççăн, брак тумасăр ĕçлеме, нормăна йаланах тултарса пыма тытăннă. Унсăр пуçне вĕсем кайа йулса пыракан рабочисене пулăшса пыраççĕ. Вĕсем —рабочисем, цехсем, бригадăсем хушшинчи социалисăмла ăмăртăва пуçаракансем.

Стахановецсем ĕçе тата ĕç вырăнне лайăх организацилес, технологи процесне рационализацилес тĕлĕшпе промышленнăçа пысăк улшăнусем кĕртрĕç, производствă оборудованисемпе техника йенчен ÿстерне нормăсемпе усă курассине пурнăçа кĕртмеле турĕç тата ĕç тухăçлăхне çÿлти пусăма çĕклерĕç.

Çĕмĕрле комбинатĕнче детальсене вырăнтан вырăна куçарассипе ĕçлеме уйрăм бригадăсем тунă Ку вăл станочниксемпе вĕсене пулăшакансене хăйсем тумала мар ĕçсене тăвассинчен хăтарнă. Ĕç вырăнне таса тытас шутпа детальсем хумали уйрăм сĕтелсем тата платформăсем тунă. Çавсене туни станочниксене йĕркелĕ ĕçлеме майсем туса пачĕ. Халĕ станочниксем вырăнтан тапранмасăр ĕçлеççĕ.

Куславкка комбинатĕнче шчитсене пуçтарса çирĕплетекенсем хăйсем çумне йаланлăхах çирĕплетнĕ, рационализациленĕ сĕтел çинче ĕçлеççĕ. Ĕçе организацилессине çавнашкал лайăхлатни пĕр сменăра 5 шчит кăларас вырăнне 15—18 штук кăлармала тума май пачĕ.

Стахановла йухăм производствăн технологи процесне рационализацилеме пысăккăн пулăшат.

Çĕмĕрлери „Большевик" савăтра йăвăç ваклакан станокăн çĕççисене 34 градуса улăштарса лартни ĕç тухăçлăхне йумай ÿстерне. Малтан çав станокпа 3 милиметр хулăмĕш турпаса виçĕ тоннă ваклаша кăларнă пулсан, халĕ 4,5 тоннă кăларат. Çавна пула пĕр йăвăç диффузортан тонида илесси 260—270 килограмран 320 килограма çити ÿснĕ.

Технологи процесне рационализацилени—стахановецсен творчествăлла пултарулăхĕн тата вĕсем хăйсен ĕç процесне тĕплĕн шухăшлани тăрăх туса пынин тупсăмĕ пулса тăрат. Стахановецсем станоксен çитменлĕхĕсем, производствăн технологи процесĕ тĕрĕс мар пулни çинчĕн хăйсем ыйту лартаççĕ. Предприйатисенче çĕнĕ ĕç йĕркисем кĕртесси инженерла техникăла работниксемпе стахановецсем тата пĕтĕм рабочисем çыхăнса ĕçленипе пулса пырат.

Кашни предприйатинче, цехра ĕçе пĕлсе тĕрĕс организацисен, технологи процесне рационализацилесен тата бригадăсем, цехсем, рабочисем хушшинче социалисăмла ăмăртăва анлăн вăйлатсан ĕç тухăçлăхне пысăккăн ÿстерме условисем пулаççĕ.

Стахановецсен ĕçĕсем стахановла ĕç çын вăйĕнчен, ытлашши тăрăшса ĕçлейнинчен килет тенине çĕмĕрсе такрĕç. Стахановла йухăм технологи процесне лайăхлатнипе, ĕçе тата производствăна организацилессине тĕпрен улăштарса вăйлатнипе вăйланса пырат. Стахановецсем механисăмсемпе туллин усă курасс не ĕç вырăнне йĕркеленипе, станоксене лайăх пăхса усранипе, вĕсе пе ĕçлеме вĕренсе çитнипе пурнăçа кĕртеççĕ.

Пирĕн предприйатисенче халăх тăшманĕсен сăтарла ĕçĕсем пулман пулсан, техникăна çĕнсе илесси, стахановла йухăма вăйлатасси тата та хăвăртăн малала кайнă пулĕччĕ. Вĕсене уçса палăртса çĕмĕрсе такрă. Пирĕн задачă: стахановла йухăма, массăлăн вăйлатса, сăтарçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси пулат.

Промышленнăç ĕçĕнче çитменлĕхсем чылай-ха. Хăшпĕр предприйати директăрĕсем (Макарон хапрăкĕ, Йĕлчĕкри крахмал савăчĕ, „Мельтрест" т. ыт. те) халĕ те стахановла йухăма тивĕçлипе йертсе пымаççĕ. Рабочисене çĕнĕ нормăсене çĕнсе илсе стахановецсен ретне тăма пулăшмаççĕ, условисем туса памаççĕ. Чылай предприйатисенче техника вĕренĕвне кирлĕ пек йĕркелемен. Çавна пула сăтарла ĕçсен йулашкисене пĕтересси йерипен пырат.

Массăлăх—акă мĕнре стахановла йухăмăн вăйĕ. Çакна предприйати руководителĕсен, предприйатисенчи партипе профсойуз организацисен йаланах асра тытмала. Çавна асра тытса РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас ыйтусем тавра пĕтĕм рабочисен массине йăвăçтарса, стахановла йухăма тата та вăйлăн çĕклемелле.

И. Риманăв.

Совет Сойузĕпе Йапони хушшинчи ĕçсем пирки

Апрелĕн 4-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Йапонири полпредĕ Славуцкий йулташ, Совет правительстви хушшипе, нумай конкретлă ыйтусем тĕлĕшпе (çав шутра почта илсе çÿрекен самолĕта, „Вымпел" патла шхунăна, „Кузнецкстрой" пăрахута тытса чарни пирки, Хĕвелтухăç Китай чукунçулĕшĕн тÿлемен пирки тăратна совет требованийĕсем, совет влаçĕсем Йапонин темиçе шхунне вĕсем çинчи çынсемпе пĕрлех тытса чарни, Йапонин хăшпĕр граждансене ирĕксĕрлесех тытса чарни, Сахалинри Йапони концессийĕсем тĕлĕшпе пана ходатайствăсем тата ытти ыйтусем пирки тăратна Йапони требованийĕсем) пĕр вăхăтрах каласа татăлма Йапонин йут çĕршыв ĕçĕсен министрне сĕнÿ тăратнă.

Йапони правительстви Совет правительствин сĕнĕвне йышăнман. Почта илсе çÿрекен самолĕта парасси пирки, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи вăрман хуçалăхĕн каттерĕ çинчи пассажирсене кăларса йарасси тата Хĕвелтухăç Китай чукунçулĕшĕн тÿлес пирки вăл Совет правительствине—Манчжоу-Го правительствипе калаçма хушнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Йапони правительстви халех пулă тытмалли конвенци (килĕшÿ) тăвасси çинчен, Благовещенскра Хабаровскинче Йапони консульствисене хăварасси тата ытти çинчен те сĕнÿ панă.

„Кузнецкстрой" пăрахут хăй командипе пĕрле, пăрахут капитане ун çине Йапони суçĕ хуна штрафа тÿленĕ хыççăн кăна Йапониренех тухса килме май илнĕ.

Хĕвелтухăç Китай чукунçулĕшĕн тÿлес тĕлĕшпе Йапони правительстви ответлине пăрахăç тумасăр, Совет правительстви ĕç интерессĕшĕн почта илсе çÿрекен самолĕт пирки тата Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи вăрман хуçалăхĕн каттерĕ çинчи совет гражданĕсене тытса чарнă пирки Манчжоу-Го влаçĕсемпе калаçнă. Совет правительстви çак ыйтусем тĕлĕшпе çителĕклĕ ответ илеймен. Манчжоу-Го Хĕвелтухăç Китай чукунçулĕшĕн тÿлеме пуласси çинчен те пăрахнă.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче Совет Сойузĕн Токиори полпредстви Йапони правительствине çĕнĕрен каланă. Полпредства çапла ăнлантарса панă: Совет правительстви хăйĕн сĕнĕвĕсене çакăн пек ыйтусене, сăмахран, Благовещенскри Хабаровскинче Йапони консульствисене хупасси çинчен тата Отарупа Кобере совет консульствисене хупасси çинчен, кĕртмен. Мĕншĕн тесен, вăл ыйтусем тĕлĕшпе Совет правительстви татăклă, улшăнмалла мар решенисем йышăннă, çавăнпа та вĕсем хăвăрт татмалли ыйтусем пулса тăмаççĕ, вĕсене татса пама, пулă тытмалли конвенци тăвасси пек, вăрăм вăхăт кирлĕ. Полпредство малтан тăратнă сĕнÿсем тĕлĕшпе тĕплĕн ответлеме ыйтнă.

Полпредствăн иккĕмĕш заявленине хирĕç Йапони йенчен ответ пулман-ха.

(ТАСС).

В. И. Ленин музейĕн Ленинградри филиалĕнче

В. И. Ленин музейĕн Ленинградри филиалĕ Майăн уйавĕ тĕлне Октябрьти Социалисăмла Аслă Революци событийĕсемпе çыхăнни пе паллă пулса тăракан чылай хатерсене йĕркене кĕртет.

Çынсене пырса пăхмашкан С. Й. Аллилуевĕн рабочи хватерне уçнă та тете. 1916 çулта кунта йăлăна 6-мĕшĕнчен пуçласа 11-мĕшне çитиччен (кивĕ стилĕпе) Владимир Ильич контрреволюцилĕ вăхăтлăх правительства йĕрленинчен пытанса пурăннă. Хăшпĕр вăхăтсенче Сталин йулташ та çакăнта пурăннă.

Çынсене пырса пăхма Йелизаровсен хватерне те уçнă, унта хăшпĕр вăхăтсенче Ленин пурăннă.

Майăн 1-мĕшне çынсене пырса пăхма татах икĕ хватер уçаççĕ: пĕри Карповка шывĕ хĕрринчи 35-мĕш №-лĕ çурт. 1917 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕнче унта парти Тĕпкомĕн хĕçпăшаллă восстани пуçласа ыйтăва татса пана историлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Теприн—М. В. Фофанова хватерĕ, унта Владимир Ильич Октябер кунĕсем умĕн вăхăтлăх правительства йĕрленинчен пытанса пурăннă.

(ТАСС).

Майăн 1-мĕшне хатĕрленесси йут çĕршывсенче

Испани

Ĕçлевĕн Нациллĕ конфедераци Комитечĕ (Испанири профессилĕ сойузсен пысăк пĕрлешĕвĕ) çак çулхи майăн 1-мĕшне ĕçлемелли кун тума йышăннă. Конфедерацине кĕрекен профсойуз членĕсем пурте çав кун хăйсем ĕçлеменине çĕршывăн оборонине ĕçре пама пулаççĕ. Майăн 1-мĕшĕнче рабочисем фронта кайса çÿрессине организацилеççĕ.

Америкари Пĕрлешÿллĕ Штатсем

Америкари общественлă организацисем май уйавĕсене пысăккăн хатĕрленеççĕ. Пур хуласенче те пĕрлĕх фронĕн вăрçа тата фашисăма хирĕçле демонстрацисем пулса иртеççĕ. Майăн 1 мĕшĕнче Нью-Йоркра пулакан демонстраци халиччен Америкăра пулман чи пысăк демонстраци пуласса кĕтеççĕ.

Майăн 1-мĕшне иртерес тĕлĕшпе ĕçлекен комитет Нью-Йоркри майăн 1-мĕшне хатĕрленес тĕлĕшпе конференци туса иртернĕ. Конференцине 552 организацирен пине йахăн делегат пулнă. Çав организацисен ретĕнче 700 пин член шутланат.

Бельги

Бельги компартийĕ халăхсем патне чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Компарти майăн 1-мĕшĕнче ĕççыннисене миршĕн тата ирĕклĕхшĕн, çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери фашисăма хирĕçле лозунгсемпе демонстраци туса иртерме чĕнсе каланă.

„Компарти çапла паллă тунă: Бельгири халăх массисем çав кун социалиссемпе комунистсен тата фашисăма хирĕç кĕрешекенсен пĕрлĕхне кăтартмала,—тенĕ.

(ТАСС).

Астрăханьти водниксен Пахомăв йачĕпе тăракан клубĕнче 200 хĕрарăм-поварсем тата ресторансенчи официантсем—„ПВХО" значок нормине панă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Осоавиахиман Киравск райсоветĕн инструкторĕ Мансырĕв йулташ противогаз тăхăнас техникăна вĕреннине тĕрĕслет.

К. Борисăв фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Савăтăн хăшпĕр кăлтăкĕсем

Шупашкарти тир-сăран савăтĕнчи рабочисемпе служащисем Май уйавне апрел уйăхĕнчи планран иртерсе 1.500 мăшăр атă-пушмак туса кăларнипе кĕтсе илме пулнă. Халĕ вĕсем хăйсен сăмахне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Уйрăмăнах йулашки вăхăтра Пелагейа Скачкова йулташ бригади пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Унăн бригади нормăна кулленех 195 215 процент таран тултарат. Скачкова йулташ хăйĕн опычĕпе ытти рабочисене паллаштарат.

Савăтра апрелĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа социалисăмла ăмăрту йепле пынине кăтартса паракан бÿллетен тухса тăрат. Апрелĕн 20-мĕшĕнче тухнă бÿллетен çакăн пек тĕслĕхсемпе паллаштарат: савăт апрелĕн 20-мĕшĕнче хăйĕн планне 132,5 процент пурнăçланă. Социалисăмла ăмăртура çак рабочисем лайăх ĕçлеççĕ: П. Скачкова йулташ хăйĕн пĕр кунхи нормине 208,6 процент, Ржавина — 202 процент, Кирилăв—219,9 процент, Колентйев — 210,5 процент, Урокăв — 206,7 процент тата ытти йулташсем те хăйсен нормисене 200 процентран ытла тултарнă.

Рабочисен хастарлăхĕ кулленех ÿссе пырат, кунран кун çĕнĕ çĕнтерÿсем туса пыраççĕ. РСФСР Верховнăй Советне тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас кампани апрелĕн 26-мĕшĕнчен пуçланни рабочисен хастарлăхне татах та ÿсе çĕклерĕ.

Апрелĕн 23-мĕшĕнче пулса иртнĕ митингра тухса каланă рабочисем (Смирнов, Абакумăв, Куçмин, П. Скачкова) РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас кун тĕлне савăтăн малтанхи çурçулти производствă планне ытлашшипех пурнăçлама сăмах панă.

Савăт дирекцин, профорганизацин, комсомол организацийĕн тĕп задачийĕ — парти организаци йертсе пынипе рабочисем хушшинче кулленех ÿссе пыракан производствăлă хастарлăха татах та вăйлатасси, социалисăмла ăмăртура рабочисене пулăшса, вĕрентсе пырасси, агитаципе массăлă тата культурлă ĕçе лайăх организацилесси пулса тăрат. Тÿрех калас пулат, ку тĕлĕшпе пуринчен ытла культурлă-массăлă ĕç йенĕпе савăтра çитменлĕхсем питех те нумай.

Савăтра атă-пушмак цехĕ чи пысăк цех шутланат. Пайанхи кун ку цехра 78 çын ĕçлет. Иртнĕ вăхăтра унта культурник пулнă, халĕ çук. Савăт пĕтĕмпе те 12 екземпльара йахăн çеç хаçат-журналсем илсе тăрат. Хапрăк-савăт комитет председателĕ Жданко йулташ: „епĕр хаçатсене хĕрлĕ кĕтес валли çырăнса илетпĕр", тет. Çав вăхăтрах рабочисем „нихăçан та епĕр çĕнĕ хаçатсене вăхăтра вуласа пыраймастпăр", теççĕ. Атă-пушмак цехĕнче хаçат-журнал тупса вулама çук, çавăн пекех ытти цехсенче те. Савăтра чăвашсем нумай ĕçлеççĕ, анчах „Чăваш Коммунĕ" хаçат вĕсем патне сахал пырат. „Комсомольская Правда" хаçат савăтра пĕр екземпльар та çук, „Правда" хаçат икĕ екземпльар илсе тăрат. Килекен хаçатсемпе çителĕклĕ усă кураймаççĕ. Куллен пулса пымалли политинформаци ĕçĕ йулашки вăхăтсенче уйрăмăнах йапăхланнă.

Рабочисем культурлă-массăлă ĕçе лайăхлатма ыйтаççĕ. Митингра тухса калакансем уйрăмăнах çак çитменлĕхсем çине кăтартрĕç. Савăтри профорганизаци çителĕксĕр ĕçлет. Вăл Май уйавĕнчи кунсенче рабочисене валли культурлă кану организацилес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Парти организацин, профорганизацин, комсомол организацин вăхăта часмасăр çав çитменлĕхсене пĕтермеле, çапла туни социалисăмла ăмăртăва анлăн сарма май парат. Пуринчен ытла халĕ, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас кампани вăхăтĕнче, Сталинла Конституцине, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене тĕплĕн вĕренессине организацилемеле. Ку ĕç савăтра пайанхи куна йапăх пырат-ха.

Партин Шупашкар хула комитечĕн çак çитменлĕхсене пĕтерме савăтри пуçламăш организацине конкретлă пулăшмала. Агитаципе массăлă тата культурлă ĕçе вăйлатнă никĕс çинче рабочисене халăх тăшманĕсен сăтăрла çĕссен йулашкийĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерессишĕн кĕрешме мобилизацилемеле.

А. Сымокин.

Бригадă çулсене йусат

ВĂРМАР. Пысăк Йенкассинчи „Трактăр" колхозăн иртнĕ çулта вырăнти çулйĕр строителствинче пĕтĕмпе те виçĕ çын кăна ĕçленĕ.

Кăçалхи çул колхоз ку ĕçе туса пыма йатарласах бригадă организацилерĕ. Бригадăра 7 çын (бригадирĕ Тимофейĕв йулташ).

Çĕр типсе çитнĕ май бригадă çулйĕрсене йусама пуçларĕ. Бригадă членĕсем кашни кунах çул çинче ĕçлеççĕ. Халĕ вĕсем Вăрмарпа Çĕрпÿ хушшинчи çул çинчи çурхи шыв çĕмĕрсе кайнă вырăнсене тÿрлетсе йусаса тухрĕç.

Н. Петров.

Вăрмар станци ÿснĕçемĕн ÿссе пырат

Вăрмар станци революциччен пĕчĕк йал пек çеç пулнă. Халь вăл йулашки çулсенче хула пек ÿссе ларчĕ. Унта çĕнĕрен 2 хутлă вăтам шкул, автовокзал, пекарнă, санитарипе гигиенă магазинĕ, пысăк клуб лартнă. Клубра саслă кино кăтартаççĕ. Спортивентар хапрăкĕ рабочисене пурăнмали 4 пысăк çурт туса çитерет. Çак кунсенчех елеватăр тума тытăнаççĕ.

В. Григорйĕв.

Ĕ М Ĕ Т...

Кашнин хăйĕн ĕмĕчĕ.

„Богатая невеста" кино картинăри колхоз счетовочĕ Ковыньăкă хăй счетоводра ĕçлесе мухтавлă çын пуласса шанмаст, колхозри чапа тухнă колхозницăна — 400 ĕçкунĕ тунă Тимошинă Маринăна качча илсе, ĕç геройĕн упăшки пулса чапа тухасшăн.

— Ана Мускава чĕнсе орден пама пултараççĕ, — тесе шутлат Ковыньăкă. Вара вăл Маринапа пĕрле хăй те Мускава кайасшăн ĕмĕтленет.

Чăваш республикĕн Социаллă обеспечени Халăх Комиссариачĕ инвалидсене курортсене, санаторисене йарса, вĕсен сывлăхне тĕреклетме ĕмĕтленет. Çавна пĕлнĕ пекех, тĕне хирĕç ĕçлекен активис А. М. Соловйов, иккĕмĕш группăри инвалид, курорта кайма кирлĕ документсене тупса хатĕрлет. Врачсен комиççийĕ витĕр тухат. Комиççи ăна Сочи—Мацеста курортне кайма хут туса парат.

Ун тĕллĕн тата Социаллă обеспечени Халăх Комиссариатĕнче те аван çынсем тупăнчĕç.

— Есĕ йалти активис. Инвалид. Сана йусанма йаратпăр, — терĕç ăна унта. А. М. Соловйов йулташа çул çине валли 200 тенкĕ укçа парса йачĕç.

—Ку укçапа есĕ курорта çитĕн. Курортран телеграммă йар. Путовкă тÿлесе илмелĕх укçа куçарса парăпăр.

Çакăн пек сăмахпа ăсатнă ăна Халăх Комиссарĕ Шумилăв йулташ.

Çул уçĕ. Соловйов йулташ Елĕк районĕнчи Куракăш йалĕнчен Вăрнар станцине çитме лав тытат. Мускаври хăй çитнĕ вокзалтан тепĕр вокзала çуранах утат. Паллах, укçа перекетлентĕр! Пăравус та ĕнтĕ хăшкаса пыма пуçларĕ. Уй-хир, вăрман, йал, хула иртеирте йулат. Акă Сочи...

— Ыра сунса кĕтетпĕр! Камăн мĕнле путовка? Хăш курорта?

Сочири курорт бÿровĕ Чăваш республикĕнчи Социаллă обеспечени Халăх Комиссариатне Соловйов валли путовкă укçи ыйтса телеграммă йарат.

Телеграмма кайала киличчен Соловйов йулташăн хватер тупса пурăнмала. Хватер тупма хĕн. Ахалĕн 24 сехет хушшинче Сочирен тухса каймала. Курорт управленийĕ Сочи хула совечĕ урлă вăхăтлăха „Колхозник çуртне" вырнаçтарат.

Пайан иртет. Ыран пулат. Телеграммă та, укçа та килмест. Сочи çаплах Шупашкара пĕррĕмĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш телеграммă та йарат. Ку ĕçе Сочи прокурорĕ те хутшăнчĕ.

Ответ çитрĕ:

—Перевод средств на лечение Соловьева задерживается, ввиду отсутствия кредитов. Чувашнаркомсобес.

Соловйов аллине Сочири курорт бÿровĕ урăх путовка пачĕ:

„Отделу социального обеспечения г. Сочи.

Тов. Соловьев А. М. приехал на курорт Сочи—Мацеста по направлению врачей с обязательством Наркомсобеса ЧАССР принять на себя расходы по поездке на курорт и оплатить путевку. Тов. Соловьев прибыл в Сочи 31 декабря 37 г.. Была дана телграмма за счет больного в Наркомсобес. Ответа не было. Вторично была послана телеграмма 4/I. Ответ получен 7/I—38., что перевод...

Копию прилагаем.

Тов. Соловьеву необходимо выехать обратно. Просим оказать материальную помощь указанному товарищу на обратный проезд.

Зав. курбюро (алă пуснă)".

Соловйов йулташ кайала мĕнле çитни каламасăрах паллă. Епĕр çакна пĕлетпĕр: вăл унтан пĕр пус укçасăр тата... тухса килнĕ. Тата çакă та пире паллă: врачсен комиççийĕ йулашки хут пăхнă тăрах, Соловйов йулташ инвалидсен виççĕмĕш группине куçнă.

Чĕрĕ çынтан мăшкăлакансем хăйсен тивĕçлипе ответ тытĕç тесе ĕмĕтленетпĕр.

Ив. Моçейĕв.

Ответлă редактăр Н. М СЕМЕНАВ.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççийĕ ПĔЛТЕРНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççин адресĕ çапла: Шупашкар хули, Чувашскайа, № 6. Пĕррĕмĕш хутлăх, 8-мĕш тата 9-мĕш № пÿлĕмсем. (Ĕçтăвакан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çуртĕ). Телефонсем: 0—02, 0—55 тата 5—24.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 29-мĕшĕнче
Вырăсла спектакль
Л. Н. ТОЛСТОЙ
АННА КАРЕНИНА
Аслă режиссор
Г. В. Странский лартат.
Художник *Й. Н. Сапожникăв.*
Талон № 180.
Абонемент № 6, талон № 17.

УЙАВ УМĔНХИ ПАСАР

1938 çулхи апрелĕн 29—30-мĕш кунĕсенче
ШУПАШКАРТА,
(симĕс) пасар площăдĕнче
уйав умĕнхи ПАСАР ПУЛАТ.

Государствă тата кооперативла суту-илÿ организацийĕсем тĕрлĕрен таварсемпе тухаççĕ.

Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ Шупашкар, Çĕрпÿ, Сĕнтĕрвăрри, Тутаркас тата Ишлей районĕсенчи суту-илÿ пайĕсене—хăйсен районĕсенчи колхозсем, колхозниксем тата йединоличниксем йалхуçалăх продуктисемпе килессине организацилеме хушат.

Чăваш АССР Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ,
Шупашкар хули, суту-илÿ пайĕ.

2—2

ТАВАР ИЛЕКЕНСЕМ!!!

Май уйавĕ валли чи лайăх, тутлă кондитер таварĕсем илме „Бакалея" магазинне пырăр. Унта есĕр Совет Сойузĕнчи чи лайăх хапрăксенче („Красный Октябрь", Микоян йачĕпе тăракан хапрăк, Марат йачĕпе тăракан, Бабайĕв йачĕпе тăракан тата „Большевик" хапрăксенче) тунă чи лайăх суртлă

конфетсем, монпансйе,
шеколадсем, печени,
карамельсем, премĕксем

ИЛМЕ ПУЛТАРАТĂР.

Магазин çăкăр-булкăсем:
ТОРТСЕМ, ПИРОЖНĂЙСЕМ, КЕКССЕМ
тата ыттисене те пĕçерсе пама
ЗАКАЗСЕМ ЙЫШĂНАТ

Магазинра тĕрлĕ йышши хĕрлĕ ерехсем пур:
портвейн, мадера, токай, кагор, наливкăсем, ликерсем, коньйаксем.

Халь кÿрсе килнĕ АПЕЛЬСИНСЕМ, ЛИМОНСЕМ пур.

Таварсене киле леçсе пама заказ парăр

Уйав умĕнхи кунсенче (апрелĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа 30-мĕшĕччен) магазин ирхине 7 сехетрен пуçласа çурçĕр иртсен пĕр сехетчен ĕçлет.

Заказсем памалли телефон № 5—26.

„Бакалея" магазинĕ.

2—2

Куçма Çергейĕв

Чикĕ хĕрринчи çĕршыв

Ленин тата Сталин кăтартса панă çулпа утса Совет Белоруççийĕ çак 20 çул хушшинче калама çук пысăк çитĕнÿсем турĕ. хăйĕн сăн-питне тĕппипех улăштарчĕ, пирĕн ытам çитми аслă çĕршывăн малта пыракан республикĕсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Ирĕккĕн сывлат белорус халăхĕ. Белоруççи Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ май вăл пайан кун тепĕр хут хăйĕн çитĕнĕвĕсене пăхса савăнат. Хĕрÿ ĕçпе вĕресе тăракан суйлав участкисенче агитатăрсем ку çитĕнÿсем çинчен ăнă сăмахсемпе каласа параççĕ.

Совет Белоруççинче, унăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче социалисăмла промышленнăç çирĕп вăй илчĕ. Патша саманин вăхăтĕнчи хăлтăр-халтăр хапрăк-савăтсем вырăнне пысăк гигантсем, темиçе пин çын ĕçлекен предприйатисем шăтса тухрĕç. Промышленнăç ÿсĕмне ак çак кĕске цифăрсем те лайăх кăтартса параççĕ.

Халăх хуçалăхĕнче промышленнăç 73 процент йышăнса тăрат. унăн продукцийĕ иртнĕ çулта пĕр мĕлйард та 413 мĕлйун тенкĕ ситнĕ. Патша саманинчи вăхăтпа танлаштарсан, Белоруççи промышленнăçĕ 16 хут ÿснĕ. Енергетика базы 97 хут ÿснĕ. 1913 çулта 4 мĕлйун киловат-сехет електроенерги панă пулсан, 1936 çулта мĕнпур електростанцисем 388 мĕлйун киловат-сехет енерги панă. Минск, Орша, Могильовĕк, Гомĕл, Витĕбск. т. ыт. хуласенче те пысăк хапрăк-савăтсем—социалисăмла индустрин гигантĕсем туса лартнă.

Йалхуçалăхĕнче те çитĕнÿсем пысăк. Иртнĕ пилĕк çул хушшинче çĕнĕ машина трактăр станцисен шучĕ виçĕ хут ытла ÿснĕ. Вĕсен 7.480 трактăр пур, ку вăл трактăрсен хисепĕ пилĕк хут ÿсни пулат.

Колхоз уйхирĕсенче иртнĕ çул 2.300 грузовик, 610 комбайн, темиçе пин ытти тĕрлĕ йалхуçалăх машинĕсем ĕçленĕ. 136 пин колхозника ĕне туйантарнă.

Сталин йулташăн çитес сывăх çулсенче 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă туса илмеле текен лозунгне пурнăçлассишĕн кĕрешсе, колхозсем иртнĕ çулта нихçан пулман вăйлă тырпул туса илчĕç. Халĕ ĕнтĕ Хойник районĕнчи „Труд" колхозри стаханăвĕç-бригадир В. И. Годлецкий гектар пуçне 34,7 центнĕр кĕрхи тулă, 34,9 центнĕр урпа туса илни нимама та тĕлĕнтермест. Кун пек вăйлă тырпул илнĕ колхозсене, бригадăсене, стаханăвĕçсене ĕретренех шутласа кайма пулат.

* * *

Совет Белоруççин кашни кĕтесĕ Ленин—Сталин наци политикин çĕнтерĕвĕсене куçкĕретĕн кăтартса парат. Пур çĕрте те çĕнĕ пурнăç йĕшĕрет, ирĕк ĕç йурри йантраса тăрат.

Полесйĕ тавралĕнче ĕлĕк Белоруççинче талккишпех лачака, шурлăх сарăлса выртнă. Полесйĕ хресченĕсен йăвăр пурнăçĕ çинчен халăх нумай хурлăхлă сăвă-йурă хывнă, ку йурă-сăвăсем нушалă пурнăçпа пĕрле пĕтĕм таврана саланнă.

Полесйĕ çинчен ĕмĕрхи тĕтре сирĕлчĕ, халĕ ăна пĕтĕм аслă çĕршывпа пĕрле Сталинла Конституцин хĕвелĕ çутатса тăрат. Лачакаран типĕтсе тунă нÿрлĕ тăпра çийĕн трактăрсем çÿреççĕ. Кашни ир Полесйĕ çаранне колхоз кĕтÿçĕ хăйĕн йышлă выльăх-чĕрлĕхне хуса тухат.

Акă ĕлĕкхи лачакалă вырăнсенчен пĕринче халь „БВО" колхоз вырнаçса ларнă. Тĕреклĕ колхоз, пуйан та культурăлă пурăнаççĕ унăн членĕсем. Колхозăн арманĕ, пысăк шкул, парткабинет, ача йаçли пур.

Сĕт-çу ферми 600 пуç ĕне тытат. Иртнĕ çулта колхозниксем вăйлă тырпул тата йышлă пахча-çимĕç туса илнĕ.

* * *

Совет Белоруççийĕ — чикĕ хĕрринчи çĕршыв. Кунти çынсем вăрçă хăрушлăхне уйрăмăнах асра тытаççĕ. Вĕсем пĕлеççĕ: Советлă Белоруççи уйхирĕсем урăх çĕршывпа, Польшăпа чикĕлĕ. Чикĕ сывăхра пулни вĕсене кашни минутрах пирĕн çĕршыва хапсăнакан тăшмансем çинчен асăрхаттарса тăрат.

Ак, умра Неман шывĕ. Çак шыв Могильан хресченĕсене Çверинăвă хресченĕсенчен уйăрат. Çак шыв урлă каçсанах урăх çĕршыв, урăх тĕнче.

Аслă Октябĕр революцийччен Могильан хресченĕсем те, Çверинăвă хресченĕсем те кньаç аллинче пулнă. Анчах пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар вăл кньаççене чикĕ леш йенне кăларса ывăтрĕ. Çавăнтанпа вĕсем йаланах пирĕн йеннелле йунаççĕ, ĕççыннисен таса йунĕпе нÿрленнĕ çак лайăх çĕрсене кайала тÿртса илме хатĕрленеççĕ.

Белорус халăхĕ вĕсен сăткăн ĕмĕтпе пĕлет.

Хĕрлĕ Çарпа пĕрле вăл тăшмана хирĕç тухма кирек хăш минутра та хатĕр тăрат.

Белоруççи Верховнăй Совечĕн суйлавĕ белорус халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ тавра, халăхсен суллуçĕ аслă Сталин тавра тачăн пĕтĕçнине, вăл хăйĕн ирĕкне никама та парас çуккине кăтартса парĕ.

Белоруççи, апрелĕн 25-мĕшĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 215

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста.

Алçырăвсене кайала памаççĕ.